# Капкăн

3-мĕш №. Март. 1936 çул.

Пĕр-пĕрне тапăнас мар пирки Австрипе доғăвăр тума хатĕр епĕр.
(Гитлер).




Германи фашисĕсем „мирлĕ пурнăçа йурататпăр“ тенине мĕнле ăнланма кирли.



— Атте, мĕнлескер вăл çивĕч çĕçĕсенчен тунă шăллă тискер кайăк?

— Германири фашисăм.

— Ма вăл урса кайнă тискер кайăк пек?

— Мĕншĕн тесен вăл—буржуазин клас тĕлĕшĕнчен урса кайнине палăртакан, çут тĕнчере вăрçасшăн çеç пурăнтаракан чĕрĕ чирĕ пулаť.

# Парăм Кĕркурийĕн савăнăçĕ



Е, мĕн вăл Парăм Кĕркури? Халиччен çынна памалăх пĕр чĕлĕ çăкăр пулман вĕт унăн,—тенĕ пĕринче шĕшлĕ пек кукăр сăмсалă çын.

— Ара, ара! Вăрăм пушă сĕтĕрсех сухалне шит тăрăшĕ ÿстерчĕ,—чĕлĕмне паклаттарнă унпа йунашар лараканĕ.

Авал никам хисеплемен Парăм Кĕркурийĕ халĕ колхозри чи хисеплĕ çын, выљăх пăхакан. Акă пайан та вăл анат урамала колхоз сыснисене хуса пыраť.

Ну. ну, Çветлана, айта! Ут малала,—тет вăл кайарах йулнă сысна амине. Çапла калаť те сыснана çапанçи пек туса хăратаť. Нăрăх! тенĕ ăна хирĕç сыснийĕ, нăрăх! „Нăрх" тенĕ сасă Кĕркуришĕн ăшă сăмах кланăнах туйăннă. Йал! кулкаласа илнĕ вăл сыснасем çине пăхса. Хăйĕн шап-шурă пуçлă ывăлĕ çине пăхнăнах туйăннă ăна.

Хăй чĕререн савса ÿстерекен аллă пуç сыснана аслă улăха хуса çитрĕ вăл. Самăр тусĕсем симĕс курăк çинче хăнана килнĕ пек чаплăн нăрăх-нăрăх тукаласа çÿреççĕ. Кĕркури те симĕс курăк çине ларса вĕрçĕнĕ шалавар кĕсйинчен пирус кăларса чĕртсе йараť. Лараť çапла Кĕркури. Ним çинчен те шухăшламасť. Сасартăк унăн хăлхине:

— Мĕнле пурăнатăн, Кĕркури пичче?—тенĕ сасă илтĕнет. Сасă йенеле пуçне пăраť те пĕр илемлĕ çын кулкаласа тăнине кураť.

— Ара, сывви сывах та-ха? Епĕ сана паллаймастăп-ха: кам пулатăн есĕ мана паллаканскер?

— Санăн авал пулнă тусу,—тет лешĕ.

— Хăшĕ?

— Микулай йатли.

Вĕсем пĕр-пĕрин аллине хĕрпе каччă пек чăмăртаççĕ те симĕс курăк çине лараççĕ.

Сăмах хыççăн сăмах шыв пек йухаť. Авал пулса иртнĕ ĕçсене асăнаççĕ. Иккĕшĕ пĕрле Çпиритун кулак патĕнче пилĕксене пĕкĕ пек авнине тапратаççĕ.

— Ах!—тесе йараť çапла калаçса ларнă вăхăтра Кĕркури пичче,—епĕ иртнĕ кĕркунне савăнтăмçке.

— Ну?

— „Ну" мар çав. Чăнах. „Ну" тейиччен итле, есĕ,—тет Кĕркури пичче малала калама пуçласа.— Колхозра тырă валеçеççĕ. Епĕ те колхозниксем хушшинче хăлхана чăнк тăратса ларатăп. Кама тырă миçе пăт тивнине вулаççĕ. Манăн йат та тухрĕ.

— Кĕркури Микихвĕрчĕ 250 пăт тырă тивет,— теççĕ.

Итлетĕп те хам хăлхана хам ĕненместĕп.

— Верук!—тетĕп хампа йунашар ларакан арăма,— миçе пăт терĕç çав?

— 250.

— Ой,ой!—тетĕп тĕлĕннипе. Тĕлĕнетĕп те савăнатăп та. Ним тума пĕлмен йенне лăх-лăх кулатăп. Вăт телей, тетĕп, ăçта вăл савăнăç. Колхоза кĕнĕрен вара савăнса пурăнма вĕреннĕскер вăл кун татах та савăнсах карăм.

Киле таврăнсан пĕчĕк ачана алла илтĕм те пÿртре уткаласа çÿретĕп. Урамала пăхатăп—тĕпелте авалхи пек мар, темĕнле сăрласа лартнă пек туйăнаť.

— Пайан темĕнле, çанталăк илемлĕн туйăнса пĕтеретех,—тет арăм та.

— Ара, туйăнмасăр, туйăнатех ĕнтĕ,—тетĕп ăна хирĕç.

Çур йенне ула пăру илсе йаратпăр. „Горбатски" тесе сутрĕç йунашар колхозсем.

— Горбатски-и,мĕни?—тетпĕр арăмпа,—пуçĕ пурăнтăр. Çирĕм çул ĕнесĕр пурăннă пекех пулмĕ,—тетпĕр те пăрава çавăтса киле таврăнатпăр. Манăн ачасем пăруран уйăрăлма та пĕлмеççĕ.

— Атте,—теççĕ,—пирĕн пăру кайри урисене çÿлеле çĕклесех выљаť. Мăк, мок! тесе чупаť пир пе пĕрле.

— Выљатăр, ачамсем, выљатăр,—тетпĕр арăмпа иксĕмĕр те.

Ĕçе тухма чĕнессе кĕтместпĕр.

— Ĕçлес,—тет арăм,—ара, епĕр 250 пăта авал пилĕк çул ĕçлесе те илсе курман.

— Кĕркуннесем хĕрĕхшер пăт тухсан, çирĕм пăтне Çĕпритуна параттăмăр вĕт-ха. Çитменнине çу каçипе ун ĕçне ĕçлесе,—тетĕп арăма хирĕç.

Пĕр ĕçне тăватпăр, теприне. Еç çыпăçулă пулса пыраť. Ывăннине те сисми пултăм. Ĕçленĕ çемĕн ĕçлес килет.

— Йашланатăп пулмала, Верук,—тетĕп хăш чух шÿт туса.

— Епĕ хам та таса тумланса çÿреме пуçланăран вара хĕр пекех пулса кайрăм-ха,—тет арăм та.

Кулкалатпăр вара шÿт туса. Ара, авал шÿт тума мар, ĕçрен таврăнсан йаланах: „епĕ сана качча илсех пĕтрĕм", епĕ сана качча тухсах пуçа çирĕм", тесе харкашаттăмăр. Тÿсейменнипе епĕ чышкă чăмăртаттăм, арăм йаланах турчăкапа хирĕç тăраччĕ.

— Есĕ выљăх илсе килмен пиркийех çур анине тара патăм.

— Есĕ тарçăра пурăннă пиркййех ачасем çаракутăн çÿреççĕ,—тетчĕ арăм йĕре-йĕре.

— А хаљ?—кулса йачĕ Кĕркури хăйĕн тусĕ çине пăхса,—халĕ ахăлтатсах кулас килет çавна аса илсен: пĕлтĕр çеç лартнă çĕнĕ пÿрте кĕретĕн—радио кĕрлесе лараť, Ритă сĕрмели купăспа йурăсем шăрантараť, килкартине тухатăн, картишĕнчи выљăхсем çинчен куç каймасť.

Ĕçрен пушаннă вăхăтра арăмпа сĕтел хушшине ларатпăр та:—Хай „Анатран хăпараť шурă пăрахут" йурăлă пластинкине патефонпа йарам-и?— тетĕп.

— Йар,йар! Çав тери итлес килет,—теççĕ ачасемпе арăм.

Хам та итлетĕп, ачасем те çăварĕсене карсах тăраççĕ.

Хăш чухне тата арăмпа иксĕмĕр кинона тухса утатпăр.

— Кино курмасан апат çименĕн туйăнат̆,—тет арăм.

— Ара, çаплах ĕнтĕ, çаплах,—тетĕп ăна хирĕç,—темĕскер çитмен пек туйăнат̆.

Йе тата хĕллехи каçсенче тăман тавраш ĕ пулат̆-и? Тухма çук ниçта та. Вара Рită сĕрмели купăсĕпе тĕрлĕ йурăсем йурлаттарат̆, амăшĕ çинçе уçă сассипе йурласа йарат̆. Ех, итлесе савăнатăп вара. Хамăн та хут купăс илсе шăрантарма шухăш пурха,—тет йулташĕ çине пăхса Кĕркури.

Микулай хуларан илсе килнĕ пируса туртаççĕ вĕсем. Пирус тĕтĕмĕ ункăн-ункăн йаванса хăпарат̆. Пирус туртнă май:—Есĕ питĕ савăнăçлă пурăнатăн иккен, Кĕркури пичче, пĕтĕм искуствă саа килĕнте вĕт,—тет.

— Ара, искусствă колхозник килĕнче пулмасăр. Акă тата хăшпĕр хатĕрсене илме хулана пыратăп-ха.

Вĕсен пичĕсем çинче савăнăç выљат̆. Илемлĕ пурнăç грексен искусстви пек вĕсен сăнĕ çинче палăрса тăрат̆.

И. Кашлинке.

# Йединоличниксене колхоза кӳртес тĕлĕшпе ĕçлемен предçедатĕл




— Мĕскер иккĕш те пуçĕсене чиксех шухăшлаççĕ?

— Ку çынни, йединоличник, колхоза кĕресси çинчен шухăшлат̆. Лешĕ тата, йалсовет предçедатĕлĕ, колхоза илесси çинчен шухăшлат̆. Анчах ĕçĕ иккĕшĕн те шухăшласа ларнипех иртсе кайат̆.



# Мирунпа Аӊук

Пухура хытӑ тарӑхрӗ Мирун мучи. Такам та тарӑхмала, ара председателӗ тухрӗ те:

— Сначӑт кӑҫал,—терӗ,—ликвидаци тӑватпӑр хут пӗлменлӗхе. Текех тӳсме кирлӗ мар капиталисӑмран йулнӑ тӗттӗмлӗхе. Акӑ пӑхӑр, постановлени... Епӗ самокритикӑ пуҫлатӑп. Вот Мируна илӗр. Хутла ним те пӗлмест. Ёнер укҫа илмели справкӑна кирлӗ мар хут тесе тапак туртса йанӑ...

— Епӗ анчах-им хут пӗлменни. Есӗ мӗн ман ҫине кӑтартатӑн. Акӑ Хветӗр тата ачин перекет кӗнекине стена ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ. Татах калап: укҫа илмели справкӑсене ун пек перус хучӗ ҫине ҫапмала мар. Сирӗн ун ҫине ҫавӑрӑнса йе ҫавӑрӑнмасӑр пӑхмала.

Лайӑх мар пулчӗ пулас Мируна. Вӑл тарӑхман-и тен, так ун ҫапла ӑшчик тулса ҫитнӗ пуӆ. Вӑл хут пӗлменни ҫине нумай тарӑхнӑ. Ҫавӑнпа та пӑру тир калпакне чалӑшла пусса лартрӗ те уттарчӗ килеле.

— Ай, ара, ҫавна картатӑп-и. Ҫавна та вӗренеймесен ҫакӑнтах пӗверсӗр пулас. Стоп!—терӗ те пӳрнисене рас хуҫлатса илчӗ.—Ей, Палкан, есӗ те вӗт хут таврашне ним те пӗлместӗн,—терӗ йунашар утакан йыттине.

— Карчӑк, тӗп тӑватпӑр! Йачӗ-шывӗ ан пултӑр пирӗн таврашра,—терӗ арӑмӗ умне пырса.

— Ех, Мирун, ман ҫине тӑрӑнатӑн. Есӗ мӗн, ӗлӗкхи самана терӗн-им? Санран нихҫан та вӑл „тӗп тӑватӑп“ тенӗ сӑмаха илтменччӗ.

— Сан ҫинчен каламастӑп, Аӊук! Хут пӗлменнине тӗп тумала пирӗн. Председателӗ каланӑ пек, „ликвидаци“ тумала. Мӗн ҫынна култарас. Хут пӗлместӗн есӗ. Саншӑн хут ҫакӑ кӗнеке, хут ҫакӑ,—сылӑшала пӳрнипе кӑтартрӗ.

— Каккуй есӗ арҫын, хутла та пӗлместӗн!

— А есе каккуй хӗрарӑм, хутла та пӗлместӗн!

Каҫхи апатра Мирун мучипе карчӑкӗ тата Петӗкӑ пионер вӗренӳ ҫинчен догавӑр турӗҫ. Хут ҫине ҫырман, кашӑк сасси шакӑлтатни алӑ пуснӑ пекех ҫирӗп вӗсен.

— Ой, Петӗкӑ, епӗр вӗреннине никама та ан кала, кулса вилӗҫ. Мирун, есӗ те ан пакӑлтатса ҫӳре! Сан пуҫу тӗпсӗр пичке пек ним те тытса тӑмасть. Тем те курӑн, утмӑла ҫитесси ултӑ ҫул—хут вӗренме тытӑнатӑп.

— Аллӑ ҫулчен кӑна вӗрентеҫҫӗ, сана вӗренмесен те йурать,—терӗ Петӗкӑ.

— Ҫук, ватлӑхра та пулин вӗренес, Мирун вӗренсен, епӗ тата... вӑл вӗреннине епӗ вӗренейместӗп-и?

Тепӗр каҫхине Петӗкӑ букварӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Сӗтел хушшинче виҫҫӗн, Петӗкӑ варӗнче.

— Малтанах калатӑп, урока хатӗрленмесен „плохо“ лартатӑп. Атте-анне тесе тӑмастӑп.

— Апла ан калаҫ, Петӗкӑ, ҫӗнӗ картус илсе памастӑп,—терӗ Мирун мучи кулкаласа. Ун вӑрӑм сухалли сӗтеле шӑлса илчӗ.

Малтанхи кунӗнче Петӗкӑ икӗ саспалли вӗрентрӗ: „А“, „Н“. Ҫурҫӗр иртичченех пӳртре „ан“, „на“, „Ана“, тени йантраса тӑчӗ.

Ирпеле икерчӗсем те Аӊук инкен „А“, „Н“ майлӑ пулаҫҫӗ. Вӗри ҫатма ҫинче „на“, „ана“ тенӗ сӑмахсене ҫупа шаритлет. Каҫхи икерчӗ хыҫҫӑнах: Петӗка, тӗрӗс вӗт! Ав аҫу маннӑ пуӆ,—тет кулкаласа. Мирун мучи ҫуллӑ, вӗри „на“ „ан“, „ана“-сене иккӗ-виҫҫӗ кайла-майла вуласа тухать те, сухалне сирсе ҫӑвара тӗркелесе чикет.

Хӑвӑрт кайрӗ вӗренӳ. Тепӗр уйӑхран пурте тухса кайсан:—Петӗкӑна пайан екзамӗн паратӑп,—терӗ те кукӑӆ-ҫӑмах пӗҫерме тытӑнчӗ. Петӗкӑпа Мирун таврӑннӑ ҫӗре сӗтел ҫинче тул чустинчен тунӑ тутлӑ апат-ҫимӗҫсем выртнӑ. „Петӗа, сана тав! Колхоз сыв полтӑр!“ тӗрлесе ҫырнӑ кукӑӆ-ҫӑмахсем ҫине.

Мирун мучи кӗрсе тӑчӗ.

— „Колхоз сыв полтӑр!“ „Ҫураки аки“,—вуласа тухрӗ вӑл ҫу шӑршине нӑш-нӑш шӑршласа. Тӳсме пулмарӗ, савӑннипе пӗрре кулса йачӗ, тепре куҫҫулӗ тухрӗ.—Илемлӗске пурнӑҫ!

— Аӊук, есӗ мӗн вӗреннӗ ҫемӗн йӳтеме пуҫларӑн-и мӗн?

— Ман пайан екзамӗн памала,—Мируна пӑхса, типӗтнӗ панулми пек пӗрмекленнӗ питне чӗтретсе кулчӗ.

— Апла пулсан епӗ лозунг ҫыратӑп.

Сӗтел ҫинче икӗ ватӑ тӗрмешнӗ вӑхӑтра Петӳк кӗчӗ.

— Унта пӑнчӑ мар, кӑшкӑру палли кирлӗ,—терӗ вӑл.

— Есӗ ӑна вӗренменнине, ан ыйт, Петӗкӑ,—апла паӆто илместӗп,—кулса йачӗ Мирун, арӑмӗ хыҫҫӑн.

Виҫӗ уйӑх каҫсерен хӑй ҫути ҫурҫӗр иртиччен чашкӑрса ларчӗ. Ыран хут пӗлменнисене вӗренме пухас тенӗ чух председателӗ ҫапла ҫырнӑ хут илчӗ. „Совет влаҫне тав. Есӗ пайан хӑнана кил. Ал пусатӑп:“ „Мирун, Аӊук“.

— А, каллех вӗренессинчен пӑрӑнса йуласшӑн ку Мирун! Ҫук. Ӗҫ тухмӗ!—пуҫне тытса пӑрахнӑ пек чӗтретсе илчӗ председателӗ.

Пухура Мирунпа Аӊук та пур. Председателӗ Мирунсем хут вӗренессинчен пӑрӑнасшӑн хӑтланни ҫинчен „самокритикӑ“ тӑвать.

— Кам каларӗ пӗлмест тесе? Аӊук, давай ҫырса кӑтартӑпӑр! Мен ҫырас, халӑх?

— Ҫыр, пуҫна мӗн килет ҫавна ҫыр!

Мирун туска ҫинче: „Мана ырӑ сунан ҫын хут пӗлменни ан пултӑр“, тесе ҫырса хучӗ. Аӊук ун айне: „Хветӳҫҫийе, Вассийе вӗренме сӗнетӗп“,—тесе кукӑрткаласа хучӗ.—Аӊук, сан сӑмах сиксе йулчӗ. Кунта „хутла“ кирлӗ,—терӗ Мирун мучи „вӗренме“ сӑмах умне пӳрнипе кӑтартса.

Председателӗн тӗлӗннипе куҫӗ ҫутӑлса кайрӗ, ҫамки хут купӑс пек куп ланса картланчӗ. Пурте алӑ ҫупса кулса йачӗҫ. Мирун мучипе Аӊук халӗ те вӗренеҫҫӗ.

**Н. Чурпай.**

# Ыйтусем

1. Дворикри (Трак р.) „Правда" колхоз председателӗ Григорьӗв Матвей! Сивӗ ҫанталӑксенче есӗ хӑвӑрӑн фермӑри сыснасем пек шӑнмастӑн пулӗ? Ара, есӗ сивӗре пӳртре ларатӑн, сыснасем, вите ҫук пирки, тулта сивве тӳссе иртереҫҫӗ. Епӗр сана сыснасене шӑнтнӑшӑн пӗҫертсе йарас тетпӗр. Пӗҫертсе йанин ӑшшипе сыснасем те кӑштах ӑшӑнса йуласса шанатпӑр. (Ҫеменке).

2. Ишлей районӗнчи Автанкасси колхоз правленийӗ! Ҫентаберте туса пӗтернӗ пахча-ҫимӗҫ усрамали сирӗн йанвар уйӑхӗнче йӑтӑнса аннӑ. 700 пӑт паранкӑ ниме усӑсӑр нимӗр пулнӑ. Нимӗрне председателе ҫигеретӗр-и, йе правленин ытти членӗсене те тутанса пӑхтаратӑр?

3. Пишпулҙак районӗнчи (Пушкӑрт республикӗ) Каганович йачӗпе тӑракан колхоз! Сирӗн лаборатори пӳрчӗн кӗрхи акан суха касси тарӑнӑшне виҫмели хӑма пурччӗ. Лаборатори пӳрчӗн ӗҫӗсене Ахливанӑв Галей „хытӑ" йертсе пынипе, хӑмисем чӑтаймасӑр кӗленче йешчӗкне кӗрсе выртнӑ, ӗҫӗсем куҫа курӑнми пулса кайнӑ. Епӗр курайман ӗҫӗрсене есӗр хӑвӑр курма пултаратӑр-ши? (Г. Хунар).

4. Пайсупин йалӗнчи (Трак районӗ) „Хӗрлӗармеец" колхоз! Сирӗн председател Трофимӑв колхозӑнне 400 пӑт тырӑ пытарса хӑварнӑ тенӗ сӑмаха илтнӗ-и есӗр? Ревизи комиҫҫи сирӗн ӑҫта? Трофимӑв вӑрланине пытаракан етемсем Трофимӑвпа пӗрле йусанмали ҫурта хӑйсем те кайса ларса йусанма шухӑшламаҫҫӗ-и? (Алхай).

5. Пушнарти (Йетӗрне р.) „Мичурин" колхоз председателӗ Йарантайкин й-ш! Мичурин меслечӗпе ӗҫлетпӗр тесе-ши есӗр колхозӑн тасатман клевӗр вӑррине кирпӗч сарайӗнче выртарса йур айне туса хунӑ? Вӑл вӑрлӑха аксан, уйа клевӗрсемех шӑтса тухӗҫ-ши, йе колхоз председателӗ Йарантайкина чысласа ӳсекен хурхух йатлӑ курӑк шӑтса вӑй илсе кайӗ-ши? (Ленски).

6. Ентрейелӗнчи (Шӑхасан районӗ) „Герой" промколхоз правленийӗ! Есӗ колхозниксене хӑҫан ҫуртри улӑмӗ валеҫсе паран? Вӑл улӑма шӑшисем вакласа арпа тусан-и?

### Германири кӗҫӗн шкулта

— Господин министр, пирӗн шкулӑн ӗҫӗсемпе паллашма килтӗр-и есӗр?

— Ҫук. Епӗ сире ачасене часрах, ҫак ҫитес уйӑхсенчех, ӳстерсе ҫитерсе мӑн ҫынсем туса йама хушса хӑварас тесе килтӗм... Пире ачасем мар, салтаксем кирлӗ.



# Сыхлакан тумтир

Йалсенче халӗ те хӗрсене тӳрех алӑпа ҫавӑрса илсе вӑрҫтарас йӑла пӗтсе ҫитеймен.




„Капкӑн" шухӑшӗпе хӗрсен тӗрлӗрен улахсене тухса ҫӳренӗ чухне ҫакӑнта кӑтартнӑ йӗплӗ кӗпесем тӑхӑнса каймала.

### Вӗсем хӑраҫҫӗ

— „Иване" сӑмахра „е" тӑррине мӗншӗн лартмастӑр пӗри те?

Вӗренекенсем.—Учитӗл туска ҫине ҫапла ҫырса панӑ та... тетратсем ҫине „ӗ" ҫырсан, учитӗл „плохо" лартасран хӑрарӑмӑр.

ШЫВҪИ.

# Аса илме ҫыхнӑ тӗвӗ

Вӑл—вак йапала, вак йапала, теҫҫӗ. Хӑш чухне вак йапаларан та мӑнттай йапала пулма пултарать. Сӑмахран, пирӗн колхоз председателӗ Йармула Терентйич Похдобкинпа пулнӑ ӗҫе илер. Чи пӗчӗкҫӗ йапаларанах калама ҫук пысӑк йапала пулса тӑнӑ уншӑн.

Йармула Терентйевич пӗрре колхоз правленинче хӑйне пит мӑнкӑмӑллӑн тытса ларнӑ. Ларнӑ хушӑра Йармулан пичӗ-куҫӗ сасартӑках пӑхма хитре мар пулса чалӑшса кайнӑ: сӑмси ҫунаттисем сарӑлса тухнӑ, пичӗсем картланса кайнӑ. Паллах—ҫынни сунас килнипе ӳсӗрме хӑтланни палӑрнӑ. Сунас ӳсӗрсе аппаланма ӗҫ вӑхӑтӗнче питех мар та, анчах сӑмсана чарма ҫук. Йармула улӑп пек вӑйлӑн сунаспа ӳсӗрнӗ те, культурӑ революци вӑхӑчӗ пынине аса илсе, пиншак касйинчен сӑмса тутрине кӑларса, сӑмсине тутӑрпа шӑла-шӑла типӗтме тытӑннӑ, тепӗр майла калас пулсан, сӑмсине мелиораци тунӑ.

Ку йурать-ха. Йармула сӑмсине шӑлса илнӗ хыҫҫӑн, аллинчи тутри ҫине пӑхнӑ та, тутринче аса илме ҫыхнӑ тӗвӗ пуррине курах кайнӑ.

— Хм!—шухӑша кайнӑ пирӗн хисепе тивӗҫлӗ Йармула.—Ӗнер каҫ, пайан темӗскере аса илмеле пултӑр тесе, тутӑр вӗҫне тӗвӗ туса ҫыхнӑччӗ. Мӗне аса илме кирлине—маннӑ кайнӑ. Питех те паха ӗҫ ҫинчен аса илесшӗн пулнине лайӑх астӑватӑп. Анчах мӗне аса илесшӗн пулнӑ-ши епӗ? Вӗлерсен те аса илейместӗп.

Председатӗл асапланнине, вӑл темскере аса илесшӗн тӑрмашнине епӗр сисрӗмӗр. Ӑна аса илме пулӑшас шухӑшпа:

— Тен, есӗ плугсене ҫураки ваҗҗи хатӗрленӗ май пӑхса тухасшӑн пулӗ,—терӗ пирӗнтен пӗри.—Ытти колхозсем такҫанах ремонт туса пӗтернӗ, сӑнавлӑ тухусем туса иртернӗ, епӗр плугсене те тӗрӗслесе пӑхайман. Ҫавӑн ҫинчен аса илме тӗвӗ ҫыхнӑ пулӗ есӗ?

— Ҫук,—терӗ Йармула.

— Апла пулсан есӗ вӑрлӑхсене протравит тӑвас ӗҫе аса илесшӗн пулнӑ пулӗ?—ӑна аса илтерме хӑтланса пӑхрӗ тепӗр колхозник.—Акмали вӑрлӑхӑн ҫуррине анчах епӗр протравит тунӑ, пӗтӗмпех тума кирлӗ...

— Вӑл мар-ха. Ӗнер епӗ ун ҫинчен шухӑшламан,—пулчӗ председателӗн отвечӗ.

— Апла пулсан есӗ минераллӑ имҫамсем ҫинчен аса илме шухӑшласа хунӑ пулӗ?—ыйтрӗ тепӗр колхозникӗ.—Хулана кайса ҫав имҫамсене тахҫанах илсе килме тивӗҫлӗччӗ.

— Ҫук,—тарӑхса аллипе сулса йачӗ председателӗ,—ӗнер манӑн пуҫ ҫӗре ҫемҫетесси ҫинчен шухӑшламан.

Гата тимлӗрех шухӑшлама пуҫларӑмӑр епӗр пурте. Пурте председателӗн маннӑ шухӑшне аса илтересшӗн.

— Тен ӗсе дисциплинӑна хӑпартас тӗлӗшпе тумали ӗҫсене аса илесшӗн пулнӑ пулӗ?—тесе ыйтрӗ Мӗкӗте ударник.—Ахалӗн кахал етемсене ҫирӗппӗнтерех тыткалаймастӑн...

Председатӗл пуҫне ҫилӗлӗн сулласа илчӗ.

— Дисциплинӑ пирки мар-ха. Ун ҫинчен асӑнма манӑн халӗ вӑхӑт та ҫук. Ак вӑт ҫуракине иртернӗ хыҫҫӑн ун ҫинчен те аса илме пулӗ...

— Санӑн тӗвӗ колхозниксем ваҗҗи пӗрле апатланас ӗҫе организацилес пирки ҫыхнӑскер пулӗ,—терӗ тепӗр колхозникӗ.—Ытти колхозсенче хӗлле те пӗрле апатланмали столовайсем пур. Пирӗн ун пирки никамах та хыҫкаланмасть-ха.

Капла ыйтвине хирӗҫ те Йармула пуҫне сулланине кура, колхозниксем татах та ӑна пулӑшасшӑн аса илтерме тӑрӑшаҫҫӗ.

— Зайомшӑн колхозниксенчен пухнӑ укҫана банка кайса хурасси ҫинчен аса илме шухӑшланӑ пулӗ есӗ ӗнер. Ӑна ӗнтӗ тахҫахан леҫсе пама кирлӗ пулнӑ. Тытса усранӑшӑн сана ырӑламӗҫ. Вӑл та мар-и? Апла пулсан кадӑрсем кирли ҫинчен аса илме шухӑшласа хунӑ пулӗ?—Колхоз ҫамрӑкӗсене агротехник ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе пирӗн колхозра ӗҫсем начар пыраҫҫӗ. Ун ҫинчен те мар-и? Тен есӗ пирӗн колхозра халиччен те йаҫли ҫукки ҫинчен аса илсе, йаҫли уҫас ӗҫе пуҫарса йама шухӑшласа хунӑ пулӗ?..

Йармула хӑй ҫине хӑй тарӑхнӑ кӑмӑлӗпе аллипе сулса ҫеҫ ларать. Ун ҫинчен мар, урӑххи ҫинчен аса илме шухӑшласа хунӑ пулнӑ иккен вӑл.

Пӗр сехет ҫурра йахӑн епӗр колхозри ҫитменлӗхсене шута иле-иле лартӑмӑр... Ларсан ларсан вӑл сасартӑк ура ҫине сиксе тӑчӗ те, хӑйӗн ҫамкинчен ҫапса илсе, кӑшкӑрсах йачӗ:

— Аса илтӗм! Аса илтӗм! Пайан кӑнтӑрла арӑм тӑпӑрчӑ йӗкерчи пӗҫерет, тӑпӑрчӑ йӗкерчине вӑхӑтра ҫиме кайассине манас мар тесе тутӑр вӗҫне тӗвӗ туса ҫыхнӑччӗ,—терӗ.

Епӗр тӗлӗннипе ҫӑварӑмӑрсене карсах йатӑмӑр. Председатӗле тӑпӑрчӑ йӗкерчӗ ҫиме каймалине аса илтерес тӗлӗшпе епӗр пӗр икӗ сехете йахӑн аппаланса ларнӑ?! Кӑна пӗлнӗ хыҫҫӑн, суртӑмӑр та килӗмӗрсене саланас тесе ура ҫине тӑначчӗ, колхозӑн чи малта пыракан чаплӑ ударник Ваҫӳтӑв тухрӗ те Йармулана сиввӗн ҫапла каларӗ:

— Ну, вӗҫтере пар тӑпӑрчӑ йӗкерчи ҫиме халех. Есӗ ҫинӗ хушӑра, епӗр сана начар ӗҫленӗшӗн пӗҫертсе илес тӗлӗшпе тӗвӗ ҫыхса хурӑпӑр. Тӑпӑрчӑ йӗкерчи ҫинчен малтанах шухӑшласа хума пӗлетӗн, колхозри ҫитменлӗхсем ытлашши нумайланса кайнине аса илсе пӑхма тӑрӑшмастӑн,—терӗ.

Вара ҫавӑнтах пуху уҫрӗҫ те, колхозри ҫитменлӗхсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе хурасшӑн тӑрӑшман Йармулана пӗтӗм халӑхпа питӗ вирлӗ пӗҫертсе йачӗҫ.

Ҫапла хаҗхи саманара вӑл,—пӗчӗк йапаларанах пысӑк йапала пулса кайма пултарать.

Д—в.




## Маннă пашалу вырăнне.

Каçарăр пире, Мартынкассинчи (Трак р.) йалпо лавкинче ĕçлекен çынсем! Епĕр сире вађђи маннă пашалу вырăнне тимĕр муклашки хĕртсе хатĕрлерĕмĕр. Татах çĕнĕрен маннă пашалу çигерсен, есĕр, сулахай алсатулĕсемпе çеç сут тума вĕреннĕскерсем, сулахай кăçатсем, тумтирсен сулахай çаннисем йе сулахай урана тăхăнмали атăсем çеç сутма пуçлăр хăвăр лапкăрта. Сире, сулахай алсатулĕсем çеç сутма вĕреннĕ çынсене, сулахай йенчен „тимĕр муклашки“ хыптарсан пиг аван пулмала. Вара купăста хурчĕ пек авкалана-авкалана мăшăр алса тулĕ шырама тухса чупăттăрчĕ.

## Памĕтник лартатпăр.

Сан йатупа памĕтник лартас тетпĕр, Кăшаркасси (Çĕрпӳ р.) йалсовечĕн куђтсекци пуçлăхĕ Руков йулташ.

Памĕтникĕ айне хăв çырнă куђтмассăлă ĕçĕн планĕнчен илнĕ пĕр сыпăкне:

„Все общи дела (читальня) канцеђари правлений колхозов ферми канцеђари с-с и други. Привести турни вид“, — тесе пысăк саспаллисемпе çырса хурасшăн.

Кунпа килĕшетĕн-и есĕ, Руков? Килĕшместĕн пулсан памĕтник пройектне ху туса пар. Пройект не тăвиччен колхозпа йалсовет канцеђарине кайса урайĕнчи пылчăк миçе шит хулăнăшĕ, пĕренесем çинче, чӳрече анисенче купаланса тăракан тусана пăхса кил. Ахалĕн хăвăн чапна çухатма пултаратăн.

## Шăнкăрчă.

Есĕ хăвна ху „шăнкăрчă“ тесе шутлатăн пулсан та, епĕр сана „Скворцов“ тесех чĕнетпĕр. Шăнкăрчăн тĕкĕ çеç темĕнле хăмăр тĕрлĕ. Кăçал çуркуннепе çавна сăнаса пăх-ха? Ахалĕн есĕ колхозсене краскăпа вараласа, машинкăпа çапнине етем вуламала мар туса тĕрленĕ хутсем йарса, хăвна „шăнкăрчă пек тĕрлĕ“ тесе шутлатăн. Йанăшатăн есĕ, шăллăм!

Сана епĕр йĕплĕ çăмах хыптарса акă мĕнле ăс паратпăр: малашне есĕ шурă хут çине пылчăклă хулăпа виçĕ-тăвата хутчен туртса çап та „зав райзо Цивильского рика Скворцов“, тесе çалă пусса йар. Капла туни йӳнĕрех ларат вăл. Ĕне нессӳ килмест пулсан, „Буденный“ колхоза февралĕн 13-мĕш числинче йанă отношенине вуласа пăх: мĕн çинчен çырнă унта? Ху вуласа ăнланма пултаратăн-и ăна, йе колхозниксем-и? Ху та вулаймастăн пулсан, сана шурă хута варалакан „шăнкăрчă“ темех пуçлĕç.

## Ĕçкĕ ашшĕ.

Есĕ хăвна, Чебайĕв Ваçлейĕ тенĕрен, чапа тухма шуг тытрăн-и? Сана, Çатра Маркари (Иштей р.) колхоз председателне, епĕр те паллатпăр. Есĕ чейе çын, аçунтан та чейерех, ађунтан та чейерех.

Ишек тимĕрçине молотилкă йусанăшăн 130 тенкĕ тӳленĕ те, ыгларăш 200 тенкине ĕçсе йанă. Аш хатĕрлев планне тултарма 190 тенкĕ парса сысна илнĕ хыççăн 50 тенкĕ ĕçсе йанă. Хăвăн завхозпа (Маркăв Н.) пĕрле йапаласем йусаттарсан 6 тенкĕ тӳленĕ те, 12 тенкĕ шучĕпе счот çырнă. Йулашни 6 тенкипе ĕçнĕ.

Ну, кала-ха, халĕ урăлтăн пуђ: колхоз укçипе илсе ĕçнĕ ерех тутлă-и? Тутлă пулсан та, тутлă мар пулсан та пире ун çинчен çырса пĕлтер есĕ. Ахалĕн „ĕçкĕ ашшĕн“ пырĕ мĕнле тутлă ерехе йуратнине пĕлеймĕпĕр.

---

## Шăнасем.

Физикă саккунĕ тăрăх çӳлеле çĕкленнесĕмĕн çанталăк сивĕрех. Анчах Сухари—Матак йалĕнчи (Исаклă р., Куйбышĕв крайĕ) йалсоветпа колхоз правлени çурчĕсем вăл саккуна пăхăнмаççĕ. Урай çумĕнче тӳсмеле мар сивĕ, пур йенчен те çил вĕрет. Мачча çумнеле çĕкленсен ăшă çапма тытăнат. Çавăнпа касхи дежурнисем пĕр 5—6 сехет тĕлнеле саксем çине хăпарса çывăраççĕ. Тата виçтăват секетрен çавсемех сĕтелсем çинче çывăрни не курма пулат. Çурçĕр иртнĕ çĕреле пырса кĕрсен пĕр ушкăн аптăраса тăратăн: таçтан паллă мар çĕртен харлаттарса çывă нисем çеç илтĕнеççĕ. Анчах дежурнайсем сак çинче те, сĕтел çинче те çук. Аптраса пуçа маччана çĕклетĕн. Иунашар лартнă икĕ шкап тăрăнчен лапсăркка çӳçлĕ пуссем курăнаççĕ. Урайĕнчен сивĕ хăваланипе мачча çумнеле çĕкленекен ăша хыççăн унта çитсе выртна иккен вĕсем.

Дежурнисем, тул çутăлас йенне, ăшă сийĕ хăма çумне çеç тăрса йулсан, шăна пек мачча çумне сыпăсса тăмали меслетсем тупса усă курасшăн. Ĕçсем физикă саккунне хирĕçле пулнипе ун çинчен кĕнекесем çинче те тупайман. Те тупайрĕç ĕнтĕ.

Петровă, М. Н.

# ЧĔРЕ ЙУРАТСАН

Çапла чип-чипер пуранна çĕртех Петĕр Кĕркурчă çăварне шыв сыпнă пек вăрахăн çўре пуçланă. Çитменнине ирхине вырăн çинчен тăрсанах хаш хуйхăрнă вăл. Кăкăрне çав тери тăвăр пек туйăннă. Колхоз выљăх картине тухса кайас умĕн те никампа та калаçман вăл. Ни арăмĕ çине ăшшăн пăхман, ни ачине тытса ачашламан. Васкаса çĕлĕкне кусĕ çине пусарах лартнă та пўртрен тухнă.

— Мĕн пулнă ăна?—тĕлĕннĕ Йуљă йатлă савнă арăмĕ,—колхозра растратă тăвас—растратă тумали çĕрте мар, пĕрпĕр йăнăш пулнă тес, йăнăшĕ те çук пек?

Пĕр кун шухăшланă арăмĕ упăшки çинчен, икĕ кун.

— Е, е!—тенĕ вăл йулашкинчен,—такама йуратнăçке вăл. Ĕлĕк йаш чух çапла хăтланаччĕ. Епĕ çилентерсенех калаçмасчĕ, йăвăррăн сывлаччĕ. Халĕ те çапла. Иуратнă. Ват пусĕпе урăххине йуратнă!

Ăçта çитнĕ унта сăнама пуçланă Йуљă хăйĕн шанчăксăра тухнă упăшкине. Колхоз картишне кайса çўренĕ. Упăшкийĕ ĕнесене тасатнă çĕрте, йе навус хырнă çĕрте йут хĕрарăмсемпе калаçмасть-ши?—тесе шутланă вăл. Çав хушăрах упăшкийĕпе йунашар тăрса ĕçленĕ, навус хырнă, ĕнесене шчуткăпа тасатнă.

— Тен кăшт тăхтасан пĕр-пĕр хĕрарăм кнлсе тухĕ-ха ăнсăртран,—тенĕ вăл хăйне хăй.

Пĕрле ĕçленĕ пулин те, упăшки питех калаçасшăн пулман унпала. Хутран-ситрен хаш хуйхăрнă вăл. Арăмĕ çине те савăнăçлă кусĕсемпе пăхман.

— Йуратнах вăл, урăххине йуратса пăрахнă!—тенĕ те килне хурлăхлăн таврăннă.

Пĕринче çапла Петĕр Кĕркурчă тимĕр кроват çинче çывăрнă пулнă. Кун каçипе ĕçлесе ывăннăскер çав тери хытă çывăрнă вăл. Йуљă çывăракан упăшки çине пăхса алĕçĕ туса ларнă. Темĕнле тĕлĕк курнипе-и тен, Петĕр Кĕркурчă калаçма пуçланă. Ыйхă тĕлĕшпе темĕнле сăмахсем каланă хушăрах:

— Дуçă! Дуçă, ура çине тăр-ха,—тесе хыттăнах сухăрса йанă.

Упăшки темĕнле хĕрарăм йатне асăннине илтсенех Йуљăн кăкрине темĕнле тутăр татăкĕсемпе питĕрсе лартнăн туйăннă.

— Ватлăхра мана пăрахасшăн. Урăххине йуратать. Ех, ман ачамсем—Веруç, Таљă!—тесе вăраххăн ĕсĕкленĕ вăл.

Тепĕр икĕ кунтан Петĕр Кĕркурчă хăй арăмне колхоз витинчи пĕр ĕне чирлени çинчен калама пуçланă. Çулă вĕри йашкана вĕрсе сыпнă май:

— Вилетех пуљ тесе хăранăччĕ, чĕрĕлчĕ. Кăнтăрла та, каç та кайа кайа пăхаттăм. Ара шел, ху ачуна йуратнă пекех йурататăн вĕт выљăха та,—текелесе ларнă.

Йуљă шанчăксăра тухнă упăшкине ĕненме те шутламан.

—Çапла пуљ санăн, есĕ ĕне чирленĕ йўтĕмпе темĕнле Дусăсем патне çўретĕн те?—шутланă Йуљă хăйĕн пусĕнче. Анчах вăл хăй шухăшне сасартăк калама шутламан. Тĕплĕрех сăнаса пăхам-ха“—тенĕ.

Упăшкине сăнас йўтĕмпе вăл колхозпа йалсовет пленумĕсене, канашлусене чĕнмесĕрех çўреме пулланă.

Анчах Петĕр Кĕркурчă никам хĕрарăмĕпе те калаçман. Калаçсан та, ахаљ çеç калаçнă: ни куç хĕсмен, ни алă панă чух хытă чăмăртамаман, ни тула тухнă чух ураран тапса тухса кайман.

— Ха,—тенĕ вăл,— ак, чейе мур! Хăй йалан хуйхăрать, тата çитменнине колхозра пур ĕçне те тимлесех тăвать. Те ĕçленине кăтартса йураттарасшăн? Йураттартăр. Епĕ те ударницă-ха: пĕчченех виççĕр ĕçкунĕ тунă...

Упăшки киле таврăннă. Унпа пĕрле Йуљă та шанчăксăрăн утнă. Упăшкийĕ пĕрмай ĕçленĕ. Çав хушăрах пăшăрханнă. Кун пек истори куллен-кунах пулса пынă.

Йулашкинчен тўсеймен Йуљă:

— Чим-ха, вăл çырусем çырмасть-и?

Пĕрре каçхине упăшки çывăрса кайсан унăн тумтирне илнĕ те пĕтĕм кăсйисене ухтарма пуçланă. Хут кĕрсе кайнă унăн аллине. Çырнă хут. Йăпăр-йапăр турса кăларнă вăл хута.

Хĕвел çути пек йăлтăртатса ларакан лампă çути умне пырса вăрттăн вула пуçланă.

„Хаклă Иван Петрович!

„Дусă“ сывала пуçларĕ. Ыран каллех кнлсе пăхăр-ха.

Çĕрĕн-кунĕн уйăрăлмасăр пăхатăп.

Петр Григорйĕв—тесе аллине кукăр-макăр пускаласа пăнчă лартнă.

Пĕрре вуласа тухнă вăл, иккĕ. Пĕтĕм çан-çурăмне вĕри утукпа хĕртсе пуснăн туйăннă. Халиччен Петĕр Кĕркурчă ăна савса пуранни, иккĕшĕ пĕр тĕвĕ туса колхозра ударлă ĕçлени, колхозри пуйан пурнăç килсе тухнă ун кусĕ умне.

— Мĕн пулнă ăна? Мĕншĕн урăххисем патне вăрттăн çырусем çырать?—тесе сасăпах йĕрсе йанă вăл.

Вăл йĕнĕ сасса илтсен Петĕр Кĕркурчă вăраннă.

— Мĕн пулнă сана, Йуљă?—тенĕ вăл йăвашшăн.

— На, на! Кайах Дуçу патне. Манпа ан пурăн!—тесе пенĕ вăл хут таткине.

Петĕр Кĕркурчă нимĕн те ăнланман.

— Мĕн?—тенĕ вăл каллех.

— Кайах тетĕп Дуçу патне!—тенĕ Йуљă тата çиленерех.

Петĕр Кĕркурчă хут таткине вуласа тухнă та лăх-лăх-лăх! кулса йанă. Вăл кулни Йуљăна татах çилентернĕ.

Кăшт тăхтасан Петĕр Кĕркурчă:

— Чирленĕ хура ĕнен йачĕ мĕнле-чĕ-ха?— тесе ыйтнă.

Йуљă йĕрме чаранса шухăшланă-шухăшланă та:

— „Дусă“ марчи çак?—тенĕ.

— Ну ăнлантăн-и?

Йуљă нимĕн те чĕнмен. Хăйĕн питне икĕ аллипе хупланă та хăйĕнчен хăй тĕлĕннипе ахăлтатсах кулса йанă.

— Есĕ ĕне чирленĕшĕн çавăн пек хуйăратăн-и?

— Хуйхăрăн, чĕререн йуратса пăхнă йапала вĕт. Хамăрăн вăл—колхозăн!

Вĕсем иккĕшĕ те колхозри выљăх-чĕрлĕх çинчен çав тери савăнса калаçма пуçланă.

И. Кашлинке.

# Кивĕ ерехе çĕнĕ савăт-сапа ăшне

В. Макарăв ӳкерчĕкĕ



— Ма сирĕн хор: „туй, туй, туй тесе“ йурлас вырăнне, „до, до, до тесе пурнас йытта вĕлерсе прапан туса килтĕмĕр“ тесе йурлаť!

— „Туй“ сăмах—авалхи сăмах. Авалхи сăмаха çĕнĕ сăмахпа улăштарас тесе çавăн пек „до, до, до тесе“ йурлаççĕ.

## Вăрăм чĕлхе.

Похвиçнĕ районĕнчи çыхăну уйрăмĕн пуçлăхĕ Обљасăв вăрăм çынах мар, чĕлхи—хăйне кура мар вăрăм. Темĕн те супăљтетет вăл çав чăсăк чĕлхепе. Сăмахран, нумайах пулмасť, йалсенчи пуштă агĕнчĕсене пуҫса çакнашкал супăљтетнĕ вăл:

— Малала Шупашкар хаçат-журналĕсене пĕрне те ан çырăнтарăр. Улталаççĕ вĕсем. Çигменнине чылайĕшĕ хупăнкаланă та вĕсенчен: „Сунтал“, „Капкăн“, калăпăр.. Халăхсем те пирĕн ытларах вырăсла вуларах параççĕ, т. ыт. те.

Çакăн хыççăнах вăл чăвашла хаçат-журналсене сарма йалсенчи агĕнствăсене паракан заданийе те пĕтерсе лартаť.

Çак ытла та иртĕнсе кайнă Обљасăвăн супĕлтетме йуратакан вăрăм чĕлхине „Капкăн“ пĕкечисен хушшине хĕстерсе хутăмăр.

Мĕнле-ши хаљ Обљасăв? Кайса ыйтăр—чĕлхи ыратмасť-ши унăн?

ХВ.

## „Йĕкĕрешсем“.

Вăтам—Еверкелĕнчи (Похвиçнĕ р., Куйбышĕв крайĕ) пуштă агĕнчĕ Ф. Йелтуковпа пиçмоносĕц Шчербаков И. А. питĕ туслă пурăнаççĕ. Йĕкĕрĕшсем тесен те пыраť, çапах йĕкĕрешсем мар вĕсем. Йĕкĕрешсем марри хушамачĕсенченех паллă.

Вĕсем иккĕшĕ пĕрлешсе каталăгри хаçат-журнал хакĕсене кашни уйăха 20—30-шар пус ӳстерсе çырăнтарнипе чылайах укçа тенкĕ хатĕрленĕ. Халĕ агĕнствăна пырса кĕмесĕр, иккĕшĕ те таçта ĕҫсе çӳреççĕ. Шыраса та тупма çук. Хăш планетă çивче шыраса пăхмала-ши вĕсене?

ХВ.

# Йулашкинчен паллă пулнă

Çынпа хирĕçме йуратман вăл. Мĕн каланине, сĕннине пĕтĕмпех ырласа йышăннă. Мана хисеплеççĕ, пур ĕçе те лартма тăрăшаççĕ тесе тути хĕррисене кăмăллăн выљаткаласа хавасланса илнĕ вăл. Хавасланнине курсан хăш-пĕрисем татах та кăмăлланса кайнă. Ăна ĕç пама тăрăшнă.

— Иван Наумчă,—сана отрйад вожатăйĕ тăвас,—тенĕ комсорг Йаккăв Иванович

— Хушатăр пулсан пулас пулаŤ. Мĕн тăвас тетĕн тата,—тавăрнă Иван Наумчă.

— Иван Наумчă, есĕ политшкула йертсе пыраканни,—пĕлтернĕ Хĕрлĕ Чутайри райкомолран.

— Килĕшес, — тарăнрах шухăшласа тавăрнă Наумчă.

— Иван Наумчă, сана йалсовет президиумĕ кулљтурă çекципе йертсе пыма суйларĕ,—хут таткипе пĕлтернĕ Мăн Етмен йалсоветĕнчен.

Икĕ пўрнипе сăмси тăррине хĕстерсе тытса, комсомолĕсăн хирĕçме йураманнине аса илсе, килĕшес тенĕ йалсоветне кăмăлласа.

— Иван Наумчă, есĕ вулав çурчĕн пуçлăхĕ. Вулав çурчĕ нимĕн те ĕçлемест пулсан та, драмкружок йе ытти кружоксен ĕçне йĕркелесе йарас пулаŤ,—хирĕçнĕ комсомол организатăрĕ Челейкин.

— Колхозра çитменлĕхсем йышлана пуçларĕç. Çуракине хатĕрленмеле, плугăсем йур айĕнчех лараççĕ, коњухсем лашасене начар пăхаççĕ. Çак çитменлĕхсене никам та куракан çук. Çтена хаçачĕ те тухмасŤ хуŤ. Иртнĕ çулта çитменлĕхсене вăхăтрах çутатса пынипе ĕç аванлансах пыраŤчĕ,—вăрçнă Шемшешри „Мотор" колхозри колхозниксем.

Çак сăмах Иван Наумчăн хăлхине те пырса кĕрет. Сăмаха илтсенех çамки çине пăчăр-пăчăр тар тухаŤ, чĕри хăвăрттăн тапа пуçлаŤ. Тарăхсах сăмахлама тытăнаŤ вара хисеплĕ ĕçсен „паттăрĕ" Иван Наумчă.

— Миме пĕтĕмпех саланса кайрĕ. Тахăш ĕçĕнчен тытăнмала. Отрйад... политшкул... кулљтçекци... вулав çурчĕ... кĕнекесем сахал... Драмкружок... Хĕрлĕ улах... çтена хаçачĕ... Ну хăш ĕçĕнчен тытăнас ĕнтĕ,—çамкине вунпилĕк силлĕ картлантарса, лĕпкинчи çўçне ыраттармалах туртса илнĕ Иван Наумчă. Ку вăхăтра вăл вулав çуртĕнче ларнă. Умĕнче чĕлĕм тĕтĕмĕпе хуралнă пĕренесем. Пĕчĕк пўлĕм. Питех те тăвăррăн туйăннă ăна.

— Иван Наумчă, отрйад сборĕ хăçан пулаŤ ши?—ыйтнă çак вăхăтрах пĕр пионерки.

— Паллă мар-ха. Ĕçе ăçтан тытăнмаллине шухăшласа ларатăп. Ан канçĕрле,—хыттăн тавăрнă пионеркăна хирĕç Иван Наумчă.

— „Чапайĕв" кĕнекене пар-ха еппин. Питĕ те аван кĕнеке теççĕ ăна,—çине тăрсах ыйта пуçланă пионеркă.

— Çук. Пĕр кĕнеке пурччĕ те, такама парса йатăм,—çăварĕнчен сĕлекине сирпĕтсех кăшкăрнă Иван Наумчă. Çакăн хыççăн пионеркă вулав çуртĕнчен кăмăлсăрланса тухса шăваннă.

Вулав çурчĕн алăкĕ каллех йар-р уçăлса кайнă. Пўлĕме кăкăр таран сухаллă, колхозăн ватă ударникĕ Макар Тимофейчĕ кĕрсе тăнă.

— Иван Наумчă, сирĕн хăçан политикăна вĕренмели кружок ĕçлеме пуçлаŤ?—кăмăллăн ыйтнă вăл.

— Çук-ха, паллă мар. План туман. Кайран калăпăр,—тавăрнă Иван Наумчă. Макар Тимофейчă та вулав çуртĕнчен кăмăлсăрланса тухса утнă.

Иван Наумчă пĕччен нумай хушă ларайман. Марфа васкавлăн чупса кĕнĕ. Иван Наумчă кăмăллăн йышăннă. Хĕрсене вăл калама çук йуратаŤ. Кашни пасарах, вулав çуртне питĕрсе хăварса, хĕрсем пăхса çўреме сулланаŤ. Уншăн ăна йатламăпăр. Халĕ ăна арăм кирлĕ. Мĕншĕн тесен, пĕрремĕш хут авланнă арăмне хăваласа йанă.

— Йăван, ташлас килет! Хăçан та пулса хĕрлĕ улах тăватпăр-и?—ыйта пуçларĕ Марфа.

— Хĕрлĕ улах тата. Ташла хăвăн килĕнте,—сассине мăнăлатса тавăрнă Иван Наумчă. Çакăн пек сăмахсене илтсен Марфа та нумай хушă тăман. Колхозра ĕçсем пур-ха, тесе васкавлăн тухса уттарнă.

Иван Наумчă вулав çурчĕн пўлĕмĕнче пĕчченех йулнă. Килсе кайнă çынсем ăна питĕ те тарăн шухăша йанă.

— Еп вожатăй, пропагандис, кулљтурă çекцин руководитĕлĕ, вулав çурчĕн пуçлăхĕ, тата ытти те... Пĕр ĕçне анчах йышăнмалаччĕ те. Хамăн тем çав пур ĕçе те хапсăнас йăла пур. Мĕнле те пулсан ĕçе хама лартмасан шăмшакра канлĕх çук пек. Ĕçсем илсен те канлĕх çук иккен. Çулталăк иртет ĕнтĕ. Ăçта манăн ĕç? Чăнах, нимĕн те ĕçлеймерĕм,—çил тухсан çинçерех йăвăçсем силеннĕ пек вăл пуçне силлесе илнĕ.

Ал. Афорин.

# Чирлĕ Исайĕв

Ха-ха-ха! Тĕлĕнмеле. Ха-ха-ха! Ха-ха-ха! Кравул, вилетĕп кулса! Çăлăрах! Пит те кулăшла! ПулаŤ мĕн çын, кулăшласкер. Ха-ха-ха!..

— Мĕншĕн кулатăн çак есĕ?

— Ара йепле чăтас тен? Йепле чăтас ун пеккинчен кулмасăр? Еп çеç-и-ха. Есĕр те кулăр-ха йĕркипе каласан. Пуçлам еппин, пуçлам. Вăл кулăшла çынпа паллаштарам.

Вăрмарти Сойузпичет. Унта Исайĕв хушаматлăскер ĕçлет. Вăл, çийелтен пăхсан, ытти çынсем пекех. Темиçе пин хут пысăклатса кăтартакан кантăк-трубасем витĕр пăхсан та унăн уйрăмлăхне кăтартакан паллăсене тупма пулмĕ. Сăмси те, куçĕсем те, урисем те хăйсен вырăнĕнчех. Пăллах, аллисем те хырăм çинче мар. Çийет. ЙурлаŤ. ÇывăраŤ. СăмахлаŤ. Тем те тăваŤ. Пĕр сăмахпа, унăн органĕсем тĕрĕсех ĕçлеççĕ пек. Винтисем те пушанман. Гайкисем те туха-туха ўкнине никам та курман. Анчах кăçал, Сойузпичете ĕçлеме кĕрсен, темĕнле тĕлĕнмеле инкек килсе çапрĕ ăна. Хытах çапрĕ. Çак инкек хытă çапнипех пуљ, халиччен ахăл та сахăл кулаканскер шăпăрт пулчĕ. Пăрахрĕ кулма. Чистийех, çĕр процентĕпех манчĕ. Тĕнчери чи чаплă мыскараçă—комик те, тинĕс пек тар йухтарсан та, ăна култараймĕ. ХăŤ пĕрех ихик! тенине те илтеймĕ. Ха-ха! -тенине те. Çук, тутине те пĕр милиметр чалăштармĕ.

Ей, кулмин, мĕн тăвас унпа култарса, тейетĕр есĕр! Апла калама çук çав. Курăр-ха мĕншĕнне...

Вăл ытти çынсен хаваслă куллине те чăтма пултараймасŤ. Калăпăр, есĕ ун умĕнчех ха-ха-ха тесе кулса йаратăн. Исайĕв пуљă пек сирпĕнет.

Çил пек шăхăрса вĕççе пынипе хăйне тĕл пулан çынсене ўпне-питне, кĕрст те кĕрст, шăп та шап тутарса тўнтерсе, хăшĕнне тутине, хăшĕнне сăмсине ката-ката хăварни кăмăллă йапала тетĕр-и? Кулă тетри ун умĕнче кулма.

Пĕрре çапла почтăна пытăм та ха-ха-ха! кулса йатăм. „Капкăн" çыр-ха мана улт уйăха, йулташ Исайĕв. Пит кулăшласкер вăл. Пĕлтĕрхине аса илсе кулатăп-ха, пĕлтĕр вуланине аса илсе. Пит шўглĕ çыраççĕ унта. Йалта çырăннисем çитмеççĕ те, сан патнах килес терĕм.

Тин хам умра тăратčĕ—таçта çухалчĕ Исайĕв. Вăл ăçтала кайнине те курса йулаймарăм. Куç курми пулчĕ-и çак, ак инкек, ак инкек, хам умри çынна та çĕгертĕм-çке тесе аптранипе, куççене алтăр пек чарса пăхатăп.

— Кама шыратăн? Исайĕва-и?..

Ха-ха-ха! Ун умĕнче кулма йурать и? Вăл кулнине чăтма пултараймасть вĕт. Ун çинчен илтмен-и ес? Инçетрисем пуљ-ха. Ахалех хăратса йатăн кулса,— теççĕ почтăра ĕçлекенсем.

— Ех, ахалех пулчĕ килни,—тесе тухрăм вара почтăран. Мĕн тăвас? Утрăм вара пуса хыçса.

— Ах, мĕн тăвас унпа, Исайĕвпа? Хăçан пулĕ вăл кулакан? Антрасах çитрĕмĕр ĕнтĕ вăл кулма пăрахнипе. „Капкăн" вуласчĕçке. Ах, „Капкăн" „Капкăн"... Хăçан вулас сана? Хăçан? Çырăнасчĕ, сана. Пурпĕр памасть Сойузпичет. Епĕр сана вуласа куласран хăрать. Вăл чăтаймасть епĕр кулнине, есĕ култарнине,—çапла тарăхаççĕ Вăрмар районĕнчи „Капкăн" тусĕсем, подписчиксем Пĕр Пинер йалĕнчех вунă çын çырăннă „Капкăна". Пĕри çеç илет „Капкăнне". (Ах, телей çав çыннăн!) Ытти йалсенче миçе-ши вĕсем, „Капкăн" çырăнса та ăна илеймennисем? Ытăр—кашни йалтах пур ун пек телейсĕрсем. Ытти журналсемпе хаçатсем те часчасах çитмеççĕ. Паллах. Исайĕв пеккисем памаççĕ вĕсене. Вĕсенче те кулăшла йапаласем пулма пултараççĕ вĕт. Пĕгĕм районти подписчиксем пурте кулăшла йапаласем вуласа кулсан, ăçтан чăтăр вара Исайĕвсен кулла йурагман хăлхисем.

Çук, кулăшлах пулмарĕ фелейтонăн вĕçĕ. Ăçтан кулас тетĕн кун пек ĕçсемпе. Тўрлетмелех Исайĕв чирне. Районри „тухтăрсем", подписчиксем йачĕпе ыйтатпăр, тасатăрах чиртен Сойузпичете. Ах, вĕрентĕр Исайĕва кулма, кулла йуратма. Шел мар вĕт 3—4 тумлăм емел. Ну, ун пек май килмесен, аслати пек кулнине те чăтма пултаракан хурçă хăлхасем те пулин лартса парăрсам. Ăта, хытăрах çухăрсан, илтĕç. Вара çапах „Капкăнлă" пулăпăр-и тен. Ăна вуласа кулăпăр тăраничченн.

**Вениамин Туртуш.**




— Кам ку?

— Ку-и? Ку Урапакасси йалсовет председателĕ Емелйанăв.

— Мĕн тăвать вăл?

— Хĕллехи çанталăкра уй урлă каçакан çынсем тăман тухсан çухалса кайма пултараççĕ. Çавăнпа та çул çўрекен çынсем ан çухалса кайччăр тесе майак вырăнне хăй тухса ларнă. Ўсĕр пулин те çул çўрекенсемшĕн тăрăшма пĕлет.

# Сунарçă халапĕ



*Куçма Чулкаç.*

Çамрăк писатĕл Куçма Чулкаç халĕ иртекен ача-пăчасем валли çырнă илемлĕ литература конкурсне „Сунарçă халлапĕсем“ йатлă произведени çырса пачĕ. Çак произведенире автăр сунарçă Лапшу Çтаппанĕ тискер кайăксемпе вĕсен кайăксене тĕлĕнмеле мелсемпе тытни çинчен суйеçтерсе калавине кăтартса парать. Вулакансене çак произведенипе паллаштарас шутпа, епĕр унтан тăваттăмĕш халлапне илсе пичетлетпĕр, кунта автăр—кашкăра мĕнле тытни çинчен каласа парать.

— Çтаппан пичче! Санăн аллуна мĕн пулнă?— тесе ыйтать пĕр ачи, манăн сылтăм алă çинчи мăйăр пысăкĕш аманнă вырăна кăтартса. Унăн хыççăн ыттисем те мана сырăнса илсе йăлăнма тытăнчĕç.

— Çтаппан пичче! Каласа парсам, санăн аллуна мĕн пулнă вара?

— Епĕ, ачасем, мăн кăмăллă çын мар. Есĕр питех итлесшĕн пулсан, алла мĕн пулни çинчен каласа пама пултаратăп. Анчах унăн хăйĕн историйĕ пур.

— Апла пулсан, çав историрен пуçласа каласа парăр?—теççĕ вĕсем.

— Есĕр итлесшĕн чăнласах çунатăр пулсан каласа пама пултаратăп. Анчах есĕр ывăнса çывăрса кайасран хăратăп.

— Çук, çук, Çтаппан пичче, çывăрмастпăр,— теççĕ вĕсем.

— Çтаппан пичче, питех вăрăм-и вăл истори?— ыйтать тепри.

— Калама çук вăрăм, ачасем. Çип пек тăсса кайсан—уйăх патне çитет, çăмхаласан—хуран пысăкĕш çăмха пулать, перчетке çыхас пулсан—пĕр пурнескине те çыхма çитмест, каласа парас пулсан—пĕр уйăхах тăсăлать.

— Вăрăм пулсан та каласа пар, çывăрмастпăр,— теççĕ вĕсем.

— Шантарсах калатăр пулсан, каласа парăп. Анчах малтан çакна асăрхаттаратăп. Пĕр уйăх итлесе ларнă хыççăн, выçăпа вилсен, вара уншăн мана ан ÿпкелĕр.

— Çук, çук, Çтаппан пичче,—теççĕ пурте.

— Апла пулсан, вăл истори çинчен каласа парам сире. Çапла, ачасем, манăн сылтăм ал аманнин хăйĕн историйĕ пур. Акă вăл йепле пулса кайрĕ.

Есĕр, ачасем, манăн карчăка пурте пĕлетĕр. Колхоза кĕриччен питех никрес карчăкчĕ вăл. У-у-х, мĕн чухлĕ тарăхтарман-ши вăл мана? Çын тунă ĕçе йаланах тиркетчĕ, пĕр ĕç çинчен уйăхшар мăкăртатса çÿретчĕ.

— Вăл çапса амантри мĕн?—тетĕн есĕ.

— Çук. Манăн карчăк вăл йенчен питех аван вара. Хĕрĕх çул пурăнса та вăл мана пÿрнипе те тĕксе курман.

— Мĕн пулнă-ха тата сан аллуна?—тетĕр есĕр.

Çавăн историйĕ çинчен калатăп та ĕнтĕ. Вăл истори çав карчăкпа кĕвенте пирки пуçланса кайрĕ. Пĕрреччен, вăл пысăк витресемпе шыв кÿме кайнă та, кĕвентене вăтаранах хуçса килнĕ.

— Çтаппан, хуçăлман кĕвенте илсе пар-ха?— тесе минретме тытăнчĕ ман карчăк. Йурийех Тунти пасарне кайса пĕр лайăх кĕвенте илсе килтĕм те:

— Акă карчăк, текех ан хуç кĕвентене тетĕп. Манăн карчăк çавăркаласа пăхрĕ те кĕвентен айăпне тупрĕ.

— Куçусем тепĕр пасара кайрĕçи мĕн кĕвенте илнĕ чухне?—тет варринчен хуçăлма пуçланине кăтартса.

Пăхатăп та, тĕлĕнсех кайатăп. Пасарта чип-чипер кĕвентечĕ, киле çитнĕ çĕре хуçăлма та пуçланă амак. Çав хушăрах хам: Çĕрпÿ пасарнех каймала çав кĕвенте илме тесе шухăшлатăп.

— Ну, карчăк, винават! Çитес шăматкун Çĕрпÿ пасарне иксĕмĕр кайăпăр. Унта вара хăвна мĕнли килĕшет, çавна суйласа илĕн тетĕп.

Карчăк килĕшрĕ. Анчах, шăматкун çитесси икĕ кун çеç тăрса йулнă пулсан та, аран-аран кĕтсе илтĕм Çĕрпÿ пасарне, Карчăк шыв кÿме каймассерен йатлаçать. Пĕрре çинче, лайăх саваласа йакатман кĕвенте, тин çĕлетнĕ çĕнĕ сăхманах хул çинчен çĕтĕлтернĕ. Иккĕмĕш хут кайсан, пĕр хут кĕпе витĕр ÿтне шăйăрттарачченех ыратгарнă.

— Кĕвенте илме пĕлместĕн те, çын-и есĕ?— тесе йатлаçать карчăк.

Нимĕн тума аптăранипе Тунти пасарне кайса, çак пÿтсĕр кĕвентене хуçине хăйне сутас тетĕп. Анчах уншăнах кам кайтăр-ха çав Тунти пасарне?

Пулмасть терĕм те, иккĕмĕш хут Çĕрпÿ пасарнех кайма шутларăм. Тунти пасарĕн кĕвенти чăнласах пÿтсĕр иккен. Пĕрре çинче шыв кÿме хам кайрăм. Хулпуççисене мăка пăчкă пекех сĕрнĕрен, пуш витресемпех тарăнмала пулчĕ.

Çапла тахçантанпа кĕтекен Çĕрпÿ пасарне каймали кун çывхарса çитрĕ. Çĕрпÿ пирĕнтен çирĕм

километăр, çитменнине хĕлĕн кунĕ те кĕске. Çавăнпа епĕр пасара тул çутăличченех тухса кайрăмăр.

Вăл кун чăтма çук сивĕччĕ. Манăн çуна тупанĕсем колхозри лодăрсем пек йăрласа пыраççĕ. Пĕр ултă километăра йахăн çеç кайрăмăр.

— Хар-р-р-т!—тесе хартлатса илчĕ те лаша тăп чарăнчĕ.

Мĕн пулчĕ капла тесе тăлăп ăшне чикнĕ пуçа кăларса пăхатăп. Лаша умĕнчех кашкăр лара парать. Хăйĕн куçĕсем кăвар пекех йăлтăртатаççĕ, çул çинчен йахăнне те пăрăнмасть.

Ачасем! Хăвăрах пĕлетĕр епĕ кашкăрсене пайтах тытнă, вĕсенчен пĕрре те хăрамастăп. Çапах та çак кашкăртан хытах хăрарăм. Вăл çăварне карса пăрахнă та хама та тăлăпĕ мĕнĕпех çăтса йарасшăн туйăнать.

— Карчăк тетĕп. Пирĕн умра выçă кашкăр ларать. Çăварне хам кĕрсе кайам-и, йе сана пăрахса параси?—тетĕп.

Карчăк хăранипе шартах сикрĕ. Халиччен кашкăр курмансквр куççулĕпех йĕме тытăнчĕ.

—Çтаппан, хăв та ан кĕр, мана та ан пар,—тет.

Епĕ кашкăр тĕл пулассине пĕлмен. Ăна пĕлнĕ пулсан, ик çăварлă пăшал илсе тухнă пулăттăм.

Анчах, есĕр хăвăрах пĕлетĕр, ачасем, çакăн пек инкек килсен манăн пуçа калама çук ăслă шухăшсем пырса кĕреççĕ. Çуна çинчен siксе антăм та тăлăп çаннине чавса таран тавăрса, сылтăм алла кашкăр çăварне чикрĕм йатăм. Чĕлхиве ывăç тавра çавăрса йарса тытрăм та шаларан шала чикетĕп алла. Манăн кашкăр нимĕн те тăваймасть, урисемпе те тапкаланаймасть.

— Акă, пăх тетĕп карчăка, çуна çине ларса. Çĕрпӳве çитиччен ывăнĕ тесе кашкăра та хампала йунашарах лартрăм.

— Çтаппан, пĕтрĕн-çке, тет карчăк. Пăх-ха, аллуна пĕтĕмĕшпех хыпса йанă вĕт, чăлах пулса йулатăн,—тет.

— Карчăк, ан куҫан тетĕп. Ыр кашкăрĕ усалах пулмарĕ, хама пĕтĕмĕшпех хыпса йамарĕ тетĕп. Пĕр аласăр та пурăнма пулĕ-ха.

— Çтаппан, ара, хам та ватăлса çитетĕп, тет карчăк.

— Макăрма кирлĕ мар. Алла татсах илнĕ пулсан, Çĕрпӳри пуҫницăра çĕнĕ алă ларттарса тухăпăр. Халĕ вĕт, тухтăрсем ăсталансах çитрĕç—ура татăлсан, унăн вырăнне вилнĕ çын урине те лартса йама пултараççĕ, тетĕп.

Карчăк савăнчĕ, Çĕрпӳне часрах çитес тесе лаша хăвалама пуçларĕ. Епĕ кашкăр çине пăхса пыратăп. Манăн кашкăр куçĕсене ӳпнеле çавăрса пăрахнă, çăварĕнчен шап-шур кăпăк тухать. Вилсе кайи ку хăйамат тетĕп. Алла пăртак кăларма та шутлатăп—анчах кашкăр тарăхнипе хама майран пăвса илĕ тетĕп. Кашкăрсем вĕсем калама çук усал, хăйсене шеллесен те сана пĕрре те шеллемеççĕ.

Çĕрпӳне часах çитрĕмĕр. Лапшу Çтаппанне курса тĕлĕнччĕр тесе карчăка пасар варрипе тухма хушрăм. Пасар тулли пухăннă халăх хăранипе икĕ йеннеле çеç сирĕлсе йулать, çынсем пĕççисене çапса тĕлĕнеççĕ манран, хăраманнисем çуна патне пырса манран çапла ыйтаççĕ:

— Йепле тытрăн ку кашкăра?

— Тĕлĕнмели нимĕн те çук унта. Кашкăрсем те упасем пекех пыл çиме йуратаççĕ, аллусене пыл сĕрĕр те уйа çеç тухса выртăр. Кашкăр пырсанах сан аллуна хыпса йарĕ, есĕ ăна чĕлхинчен çавăрса тыт,—тетĕп.

— Пултарать çав Лапшу Çтаппанĕ!—тесе тĕлĕнсе йулчĕ пĕтĕм пасар.

Сунарçăсен контурне пырса кĕтĕм. Сĕтел хушшинче ларакан председатĕл мана курсанах месерле кайса ӳкрĕ.

— Хăрама кирлĕ мар, Кирил Вунихватăвич, тетĕп.

Кирил Вунихватăвич чĕтре-чĕтрех ура çине тăчĕ те:

— Çтаппан Петровчă, мĕншĕн капла чĕрĕлех тытрăн, хаҫ йепле вĕлерĕпĕр ăна?—тет.

Тепĕр айванĕ наганне туртса кăларчĕ те кашкăра хырăмĕнчен хăплаттарчĕ.

Алла çăтăр чĕпĕтсе илнĕ пек туйăнчĕ. Алла туртса кăларатăп та тĕлĕнсех кайатăп—алран паллкаса йун йухать, наган пуҫҫи кашкăр çăварĕнчен чиксе йанă ал витĕрех тухса кайнă иккен. Акă ăста аманчĕ манăн сылтăм ала, ачасем!

Шупашкар, 1936.

---

## Вулакан ачасем хушшинче

1-мĕш ача (вулать): — „Пирĕн районăн тăватă хаçат, пиллĕкĕмĕш — радио бӳлетген тухать. Колхозниксем пурте ватти-вĕттипе йуратса вулаççĕ хамăр хаçата.. „Колхозник“ хаçата çырăнман çын та пирĕн районра пит сахал вара“.

2-мĕш ача: — Мĕн вулан есĕ? Хаçатри йалкор заметкине-и?

1-мĕш ача: — Çук, сăвă вăл! Акă „Сунталăн“ 12-мĕш номĕрĕнче çапăннă.

2-мĕш ача: — Ун пек чĕлхепе çырнă йапалана ăçтан сăвă теме пулать?

1-мĕш ача: — Епĕ пĕлетĕп-и. Ăна пичетлесе кăларнă ответлă редактăртан ыйт!

---

## Памĕтник

Редакцино радиоприйомниксем ĕçлеменни çинче нумай çырусем килеççĕ.




Вилнĕ (чĕлхесĕр пулнă) радиоприйомниксен йачепе памĕтник лартатпăр. Памĕтник проектне—„Капкăн“ „инженерсем“ тун, адио итлесшĕн çунăкансем çирĕплетнĕ.

# Пурӑнма „пӗлекен“ ҫын

Курса-и есӗр хӑҫан та пулин Пурӑш Ҫимунне? Тискергерех ҫын вӑл. Хӑй хӑрах куҫлӑ. Шӑтса йухнӑ куҫӗ тӗлӗнчи ҫамки те, питҫӑмарти те ҫӗвӗлӗ. Ҫынсем каларӗш ӑна хӑй ҫамрӑк чух темӗнле тӗттӗм „ӗҫ“ тунӑшӑн ҫапса амантнӑ пулаӑ... Хӑйӗнчен ҫав ҫӗвӗ историне нихҫан та илтмен.

Пичӗ-куҫӗ те, ҫӳҫӗсем те унӑн йаланах лӗчӗркенчӗк. Пӗртенпӗр куҫӗ ҫын ҫине тӗтӗм витӗр пӑхнӑ пек тӗтрелӗн те ыйӑхлӑн пӑхаӑ. Калаҫакан ҫын урӑх йенеле пӑхаӑ пулсан ҫеҫ сасартӑк ҫивӗчленсе таврала тӗллет.

Тата тепӗр характӗрлӗ йӗр: Ҫимун ытларах ҫывӑрма йуратаӑ. Куҫ хыҫӗнче ӑна чылайӗшӗ „услап“, теприсем „кахал“ тесе те чӗнеҫҫӗ.

Пурӑш Ҫимунӗпе чылайранпа хурӑнташлӑ пулин те, пӗр-пӗрне йуратсах каймастпӑр епӗр. Тӗл пулсан та, пӗрпӗринпе ҫӳрма—шӳтле, ҫурма—йумахла калаҫнипех иртсе каяаӑ.

Епӗ колхоза 1930-мӗш ҫулта кӗтӗм. Унччен Ҫимун патне кайса курманни нумай пулаӑчӗ (вӑл кӳршӗ йалта пурӑнаӑ). Ҫӗнӗ хыпара пӗлтерес сӑлтавпа хӑнана вӗҫтертӗм.

Пӳртӗнче пӗр Ҫимун ҫеҫ. Вӑл та пулин краваӑ ҫинче ҫывӑрнӑ пек куҫне хупса выртаӑ. Урисене, халапри вупӑр пек, ҫтена ҫине тӑратнӑ.

— Авани?—тетӗп, хупмасӑрах пукан ҫине ларса.

— Ахӑ!..—тет Ҫимун, епӗ каланишӗн тарӑхнӑ пек, ҫтена ҫумнеле ҫаврӑнса выртса.

Тарӑхса карӑм. „Ҫапла хӑналаӑ-и-ха вӑл мана“—тетӗп ӑшӑмра—„хам пата пырсан епӗ те асӑнтарӑп-ха“...

Тӳрех ҫӗнӗ хыпара каласа ыйхӑран вӑратас килчӗ.

— Колхоза кӗтӗм!—тетӗп хайхине.—Есӗ кӗме шутлатӑн-и?

Ҫимун чӑнах та пӑртак интересленнӗ пек пулчӗ:

— Колхоза?.. А, колхоза!—сасартӑк ыйӑхласа пуҫне минтер ҫине хучӗ вӑл, ҫӑварне карса анасларӗ те:—Колхоз—колхоз... Еп темскер пулнӑ тесе. Унӑшкал пусӑаксене хуллентерех пӗлтереҫҫӗ ӑна. А есӗ пур... тӗве пек мӗкӗрен. Колхоза-и? Есӗ-и? Кӗнӗ те пуљ, ара. Кам тавлашаӑ-ха санпа кӗмен тесе. Тавлашакан ҫынна ҫаван пек ҫухӑрса калаҫҫӗ ӑна... Тӗрӗссипе каласан, сан пек шӗшлӗсем 1929-мӗш ҫултанпах колхозра.

Алӑ хурт-кӑпшанкӑ чупнӑ пек кӗҫӗтсе карӗ.

— „Епӗ-и шӗшлӗ?“—тетӗп хайхискер епӗ ӑшӑмра,—кӑтартӑп еп сана „шӗшлӗсем“.

Анчах хам хӑнара иккенне астуса чарӑнтӑм. Ӑнсӑртран тивнипе йулашки куҫӗ шӑтса йухасран шикленни те пулчӗ пулмала. Мӗн пулсан та—тивмерӗм.

— Ан та хӑпартлан, Ҫимун! Ху та кӗретӗн.

— Еп-и? Ан та ӗмӗтлен. Нихҫан та. Вилсен те колхоз масарӗ ҫине пытарма хушмастӑп.

— Чӑнах-и?

Ҫимун урӑх сӑмах чӗнмесӗр пуҫ ҫинченех сӑхманпа чӑрканчӗ.

Ҫавӑнтанпа виҫӗ ҫул кайса кӗмерӗм ун патне. Анчах 1933-мӗш ҫулта тӳссе пулмарӗ. Хаваслӑха ниҫта чикеймерӗм: ӗҫкунӗсем тӑрӑх колхозран ҫӗр пӑт тырӑ лекрӗ. Ун чул тырра халиччен шӑши йӑви пулнӑ пӳлмесем те курман. Ниҫта шӑнӑҫтарайми савӑнӑҫа пӗлтерме каллех Ҫимун патне карӑм. (Кайас та ҫукчӗ те, сӑрт ҫамки пек тӑлӑхтурат ҫитӗннӗскерӗн, пӗлӗшӗм-тӑванӑм урӑх ҫук).

Ҫимун ҫав вырӑнтах выртаӑ. Анчах айӗнче ҫӗтӗк кӗҫҫе вырӑнне ҫемҫе тӳшек. Хӑпартланса тӑракан мамӑк минтер. Ҫӗнӗ одейал.

Малти кӗтесре кӗҫӗн алӑкран кӑшт ҫеҫ пӗчӗкрех „Вуникӗ апостӑл“ турӑшӗ, ҫтенасем ҫинче авалхи картинсем. Виҫҫӗшне пуҫхӗрлӗ ҫакнӑ.

— Кусене ма капла ҫакрӑн?—тӗтӗп.

— Епӗ колхоз мар вӗт,—тет.—Хам пӳргре хам хуҫа: мӗнле кӑмӑла каяаӑ—ҫапла тӑватӑп,—тет.

— Епӗ те хуҫа,—тетӗп,—ҫавах та картинсене пуҫхӗрлӗ ҫакмастӑп. Хитре мар апла,—тетӗп.

— Пулин!—тет Ҫимун парӑнмасӑр.—Епӗ хам пӗлнӗ пек пурӑнатӑп. Колхозниксем кӗҫӗн алӑкран тухса ҫӳреҫҫӗ пулсан, епӗ хапхаран ҫӳретӗп, йе хӳме урлӑ,—тет.

Апла калаҫса ҫӗнтерейес ҫуккине кура хам телей ҫинчен пӗлтерме шуглатӑп (сӑмах чӗнеймийех пулӗ!).

Ҫимун аллине кӑна сӗлтет:

— Сан пек активиссене парӗҫ те... Епӗ колхозсӑрах аван пурӑнатӑп. Куратӑн-и?—тет вӑл пӳрт тавра аллисене кӑнтарса.—Мӗн тенӗ—вӑл пур. Кӗтесри вуник апостӑл патретне те хаљ туйантӑм,—тет.

— Ниҫта ӗҫлеме те каймастӑн-ҫке, ку пурлӑха ӑҫтан туйантӑн?—тетӗп.

— Пурӑнма пӗлес пулаӑ,—тет.—Колхозран тухсан сана та вӗрентӗп. Чӑн калатӑп. Колхозра ӗҫлесе чахотка кайас тетӗн-им?—тет Ҫимун, ахаљ те арпашса тӑракан ҫӳҫӗсене пурнисемпе пӑлхатса.

Икӗ виҫӗ сехет тавлашса та пӗр пӗрне ҫӗнтереймерӗмӗр: вӑл хӑйӗнне калаӑ, епӗ—хамӑнне. Вӑл „колхозран тух, ӗҫлемесӗр пурӑнассин ҫекретне вӗрентӗп“ тет, епӗ „колхоза кӗр, тӑрӑшса ӗҫлесе тырӑ ытларах илме вӗрентӗп“ тетӗп. Ик-виҫӗ сехет тавлашса кӑмӑла ернелӗх пӑсни ҫеҫ пулчӗ. Таврӑннӑ чух чипер лашана Ҫимун ҫине тарӑхнипех ҫапрӑм. Ахаљ пулсан пӳрнепе те тӗкӗнес ҫукчӗ.

Аптрас пулаӑ, мӗнле майпа пуйса кайнӑ-ши ку Ҫимун?

1934-мӗш ҫулта тепре карӑм. Картиш алӑкӗсене пӑтасемпех питӗрсе лартнипе лашана урамах хӑварма тиврӗ. Хам, вӑрӑ-хурах пек, пусмапа хӳме урлӑ кӑҫса кӗтӗм.

— Ачасем пусмӑрласа ҫитерчӗҫ, мӑшкӑлаҫҫӗ, ҫавӑнпа пигӗртӗм, хамӑр хыҫалти алӑкран тухса ҫӳретпӗр,—терӗ ун пирки Ҫимун.

Пӳртӗнче магазинри пек тӗрлӗ йапаласем шутсӑрах нумайччӗ.

— Епӗ пуйса кайнинчен тӗлӗнетӗн и?—Ҫимун курортра канакан ҫын пек пуҫне ҫемҫе минтер ҫинчен ҫӗклесе. Халӗ „индӳксенчен“ пурӑнма пӗлменнисем ҫеҫ начар пурӑнаҫҫӗ. Ыттисем, манашкал, пурӑнма чухлакансем, антрасах каймаҫҫӗ. Кӗрӗвех илес... Колхозран тухсан сана та ӗҫлемесӗрех пурӑнма вӗрентӗп, тет.

Иртнӗ ернере йе ӑна колхоза кӳртӗп, йе ӗмӗрлӗхех пӑсӑлса каяатпӑр тесе йулашки хут карӑм.

Пуҫа пӗр шухӑш ҫавӑрат: чӑнахах мӗнле майпа пуйса кайнӑ-ши вӑл Ҫимун?

Хапха умне кӑна ҫитнӗччӗ, Ҫимун килкартинчен мана хирӗҫ халӑх кӗпӗрленсе тухрӗ. Малтан пӗр лав. Унта тӑваттӑн ларнӑ икӗ милиционер, Ҫимун, тата унӑн кӗрӳшӗ.

Епӗ тӗлӗннипе хытса тӑнине кура ман пата пӗр пӗчӗк ача пычӗ.

— Икӗ ҫынна тытса карӗҫ,—терӗ вӑл хӑрах аллипе йӗмне йӑтса,—колхоз пурлӑхне ҫаратса пурӑннӑ вӗсем.

Тинех вултса илтӗм Ҫимун мӗнле пурӑнма пӗлнине... хӑрах куҫне те ҫамрӑк чух ҫакнашкал „ӗҫшӗн" ҫапса амантнӑ пулас.

Ҫак истори нумайах пулмасть Кив-Пукан йалӗнче (Куйбышӗв крайӗ, Исаклӑ районӗ) пулса иртрӗ.

Вулакансем! Сирӗн йалта та ҫук-и манӑн ӗлӗк рех хурӑнташ пулнӑ Пурӑш Ҫимунӗ пек „пурӑнма пӗлекенсем"? Хытӑ сӑнӑр!

Хв. Уйар.

## Унчен арӑмӗн ҫӑкрине ҫисе самӑрлнӑ кахал

Ҫверчков ӳкӗрчӗкӗ




— Мӗскер шухӑшласа ларатӑн, Микиш?
— Уйӑрӑлса кайнӑ арӑм шофӗра вӗренсе тухнӑ, тет. Кайала машинӗпех илсе килмели майа шухӑшлатӑп.

# УÇА ÇЫРУ

Сире, нихăш йенчен пăхсан та етем майĕ çук çынсене, капкăнла хаваслăхпа, хамăн тимĕр пĕкечесемпе хĕссе кăмăллатăп. Шăмăр - шакăрсем шăтăртатса хуçăлсан та есĕр ан çухăрăр, çиленсен те ан çиленĕр. Епĕ сире кăмăлласа хĕсетĕп пулин те, есĕр найкăшатăр пулмала. Апла пулсан çĕнĕ купăста пек çемçешкесем есĕр, купăста мар пулсан, çĕрнĕ хăйăр пек еппин.

Акă Шăхасанти кăтартулă вăтам шкулти пуçлăхсем тимĕр пĕкечепе ыталаса кăмăлланипе килĕшсех каймаççĕ.

— Епĕр 10 центнĕр купăста çĕртсе йанă. Пире пысăкрах чыс кирлĕ, — тесе тутисене мăртлаттараççĕ. Çавăнпа та епĕр вĕсене купăста вырăнне йĕплĕ çăмах çитерсе пăхас терĕмĕр. Питĕ савăнса çийессĕн туйăнат. Кăтартулă шкулти пуçлăхсем йĕплĕ çăмаха та кăтартулă çинине курма Мартынкассинчи (Трак р.) „Хĕрлĕ хĕвелтухăç“ колхоз завхозне А. Иванов йулташа чĕнме шутлатпăр. Çак ăслă çын колхоз улмине 500 пăт шăнтса йанă вĕт! Епĕр ăна „Капкăн“ сенĕкĕпе йанахĕнчен кăшт çĕклесе пăхрăмăр та: — Ман улмана хур çăмарти пек пăхса усрамала-и мĕн! — тесех çухăрчĕ вăл. Етем майлах çухăрат хăй! Сасси пысăк, упа сасси йеверлĕрех.

Çак кармаçăвар çухăрнă сасăпа Йеккĕмушкăн (Йĕтĕрне р.) колхоз председателĕпе бригадирне ташлатма шутлатпăр. Тăватă-пилĕк коњуха пурăнма метăр çурă тăршĕ пӳрт лартса панă вĕсем. Çав пӳртре ташласшăн çунаççех хăйсем. Питĕ ирĕккĕн туйăнат пулмала вĕсене тупăк пек хĕсĕк пӳртре. Пĕчĕк пӳрт тата ирĕкрех пултăр тесе урайĕсене капкăн лаççинче хĕртнĕ пăтасем çапса парасшăн епĕр. Вара хоп-хоп, ойорох, ољорох! — тесе сикчĕр вĕсем.

Çак каччӑсем ташланине курма Раккассинчи („Будйонай“ р. Тутар рес.) йалсоветпа колхоз председателĕсене чĕнес тетпĕр. Вĕсем, çăварни вăхатĕнче ĕçсе ӳсĕрĕлсе тăвата-пилĕк кун канцељарине пырса курăнмансскерсем, чӳрече умĕнче тахçанчченех пăхса тăрассăн туйăнса пĕтерет. Пилĕк кун хушши канцељарине пырса курăнман çынсем çултаlăкĕпех ахаљ тăрса хаклă вăхăта иртересрен те хăратпăр тата. Çавăнпа та пире Сĕнгĕрвăрринчи йалхуçалăх техникумĕнчи пуçлăхсем питĕ кирлĕ пулчĕç. Ара, вĕсем хăйсен студенчĕсем общежитинеле куллен кун çунашкăсемпе вутă турттарнине куркаланă çынсем. Урам хушшипе çунашка турттса çӳренине куркаланăскерсем пирĕн пăхса тăракан çынсене канцељарине ĕçлеме леçсе йарасса шанатпăр вĕт! Çунашка çинче ларса пыраймӑсăр ӳксе йулнисене пуçтарма Мартынкассинчи (Трак р.) колхоз председателĕпе тимĕрçе чĕнсех хутӑмăр. Вĕсем, никам тытса шĕвĕргмен пулсан та, шĕвĕрленсе кайнăскерсем, тимрĕç лаççинчен йур хыртарса кăлартгарнă. Йурĕпе пĕрле хыпкăçĕсем те, мăлатукĕсем те тулала сирпĕнсе тухса пĕтнĕ. Çуракине хатĕрленнĕ май, йалхуçалăх машинĕсене йусама кирлĕ хатĕрсене шырама тухсан çунашка çинчен ӳксе йулнă çынсене те çĕклесе кĕме пултарĕç тетпĕрçке!..

Мăлатуксем, хыпкăçсем çурхи ушывпа Атăла йухса ан кайччĕр, хăйсен çырминех вырттса йулчĕр тесе, пĕве тума та палăртса хутăмăр. Пĕвине пĕвелеме хăйсен колхозĕн çĕрсе кайнă 8.000 кантăр çурăмĕпе усă курма канашларăмăр. Пĕве пуçĕнчи сăвăй йупи вырăнне колхоз завхозне йĕплĕ çăмах хыптарса тăратсан аван пулмала. Çынни питĕ тĕреклĕ, тирĕ те хулăм.

Çак пулас пысăк пĕвери шыва турттарма Малтикассинчи (Вăрнар р.) „Пĕрлешӳ“ колхозникĕсене чĕнетпĕр. Етемрен çуралнă коњухсемпе пĕрле колхоз канцељаринче фермăри виçĕ пăру, пĕр йытă пурăнаççĕ. Хăмăтсем, ĕнерчĕксем, тилхеписем ăçта кирлĕ—унта йăваланса выртаççĕ. Хăйсен тирпейсĕрлĕхĕсене çуса тасатма ку шыва нагрузкă сăрах паратпăр. Епĕр Çĕнйалти (Çĕрпӳ р.) ГОРТ отделенин прикащчикĕ Фадейĕв Йакăп пек хытă çынсем мар. Вăл кăраççин литăрне 73 пуса сутас вырăнне „супăњ порошокĕ“ нагрузкă парса 1 тенкĕ те 7 пуса сутат. Пуç кукшаланса кайиччченех шутларăмăр, шутларăмăр та: — аслăраххисен куçĕсем ăçта-ши, Çĕрпӳ пасарĕнче-ши, йе пĕр-пĕр пысăк портфелте-ши? — терĕмĕр тарăхса.

Сире пурсăра та йĕплĕ çăмах хыптарса парнелетĕп. Çăмах çийес килменнисене „шĕлепке“ тăхăнтарса "Капкăн" страници çине ӳкерсе лартма шухăш та пур.

Сывă пулăр еппин тепĕре ăшалантарса иличчен!

Сирĕн „КАПКĂН“ (хăйех алă пуснă).

## „Есĕр ыйтнă тăрăх“

Кив Йакалĕнчи, Аслă Микӳшкĕлĕнчи т. ыт. йалсенчи кĕçĕн-вăтам шкулсем (Исаклă р-нĕ, Куйбышĕв крайĕ) пĕр-ик уйăх кайарах Шупашкарти Чăваш книготоргран кĕнекесем çырăнса илчĕç.

— Епĕр ыйтса йанă кĕнекесене пĕрне те йаман та, пырĕ ĕнтĕ, — текелерĕç заказчиксем, пйессăсем вырăнне выљăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен калакан кĕнекесене çавăркаласа.

Нумай иртри, сахал-и, çав шкулсенех Чăвашкниготорг магазинĕнчен тата тепрер арча, 30—50 шер тенкĕлĕх, кĕнекесем персе çитрĕç. Çырăвĕ çинче: „Есĕр ыйтнă тăрăх, сирĕн пата 11—шер № „Трактăр“ аљманаха, тата выљăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен калакан кĕнекесене йаратпăр“, тесе çырнă.

— „Есĕр ыйтнă тăрăх, сирĕн пата пĕр йешчĕк... кирпĕчĕсем йаратпăр“ текен посылкă килмесен лайăхчĕ, — теççĕ хаљ Аслă Микӳшкелĕнчи, Кив Йакăлĕнчи т. ыт. йалсенчи шкул директăрĕсем.

Х.

## Йатлă çынсем

Тарăнçырмари (Ишлей р.) „Комбайн“ колхоз председателĕ Осипов ĕçсе ӳсĕрлсе колхозăн чи лайăх лашипе пасарсем тăрăх чупса çӳрет.

— Çак пирĕнтен тĕрлетерсе иртсе кайакансем сирĕн йалти йатлăрах çынсем пулĕ. Лаши çине те шап-шурă ашăк витнĕ.

—Куçу курмарĕ пуљ. Ашăк витмен вĕсем. Лашине ӳсĕрпе чупса шуп-шурă кăпăк тăвачен мурнтленĕ.

В. ÇЕРГЕЙĔВ.

# Кино терчĕ

Пирĕн Ыхракасси колхозĕ Ишлейри кинобазăпа икĕ ернере пĕрре колхозниксене кино кăтартма договăр тунă. Çавăнпа кашни колхозник 6 тенкĕлĕх кино-абонемент туйаннă. Манăн та пур. Анчах вăт абонементпа епĕ... Пĕрремĕш кино пирĕн йала ийунĕн 28-мĕшĕнче килчĕ. Çав тери хытă хĕпĕртерĕмĕр вара вăл кун. Нимле ĕç патне те ал пымасть. Кино курасси çинчен кăна шухăшлатпăр. Ним тăвас килменнипех кăнтăрла иртни виç сехетренех кино пулакан вырăна кайса лартăм. Кĕтсе, кĕтсе аран каç пулчĕ. Халăх калама çук нумай пуçтарăнчĕ. Кино пуçланчĕ. Кино-картинин йатне пĕри те пĕлместпĕр. Екранĕ çине картинă ўкрĕ. Тискер çăмăр пĕлĕчĕсем шуса иртеççĕ. Аслати авăтать, çиçĕм çиçет. Акă тырпулă йешĕрекен хир тăрăх пĕр вăтам çулхи çын çăмăртан тарса йал йенеле ыткăнать. Çăмăр чашлатма пуçларĕ. Хайхи çын йала тарса çитме ĕлкĕреймерĕ те пĕр уй варринчи йуман хўтине тăчĕ, Çиçĕм йалтăртатса çиçрĕ те йумана аслати кĕмсĕртеттерсе çапрĕ. Çын йуман кутне йаванса кайрĕ.

Çак картинăсене чипер курса ларнă çĕртенех електрицă лампи сўнчĕ.

— Кино пĕтрĕ!—кăшкăрса йачĕ кино-механик Матвейĕв.

— Пĕр пайне курмасăрах-и?— ыйтаççĕ темиçе сасă харăс.

— Динамăна çавăракан ручкă хуçăлса кайрĕ,— ответлет Матвейĕв.

— Аслати çапрĕ пулĕ,—тет шўт тума йуратакан Саңук. Анчах кулакансем никам та çук. Пурте çилевнĕ.

— Пĕрре килнĕ кинона та кураймастпăр та ара,—тесе пурте килĕсене вăрçса саланчĕç.

— Ан вăрçăр, ыран килетĕп,—тет Матвейĕв. Анчах „ыран" мар, урăх...

Иккĕмĕш кино декабĕрĕн малтанхи кунĕсенче çитрĕ. Ку кино Шупашкартан, Чăвашкуљпромсойузран килнĕскер. Кино картини „Рйазаң арăмĕсем" йатлă. Курма пуçларăмăр. Картинăна пĕр-ик минут куратпăр та пĕтсе ларать. Пĕртакран малала куратпăр. Тепĕр минутран каллех пĕтсе ларать.

— Мĕн пулнă?—ыйтатпăр.

— Динамăна çавăракан ручкă йакалса кайнă та, динамăна çавăрмасть,—тет механик Йермаков.

— Йусас пулать,—илтĕнчĕ сасă.

Кун хыççăн чăнах та йусама пуçларĕç. Ручкăна кантрасемпе, пралукпа çыхкаласа динамăна çавăракан турĕç. Анчах тата таçта темĕскер инкекĕ пур. Картинăсем рамкăран тухса кайаççĕ, хăш чухне çурри курăнать, çурри курăнмасть. Кашни минутрах кăтартма чарăнса лентăна йусаса ларать. Кинона 6 сехетре курма пуçласа 12 сехет иртсен аран-аран курса пĕтертĕмĕр. Анчах нимĕн те ăнланмарăмăр.

Çапла вара, хисеплĕ вулакансем, 1935-мĕш çулта епĕр кино иккĕ курнă пултăмăр. Йулашкинчен есĕр Ишлей кинобазинче ĕçлекен пуçлăхсем, 1936-мĕш çулта та 1935-мĕш çулти пек киносем кăтартăр-ши?—тесе ыйту паратпăр епĕр. В. Ç.

---

## „Тĕрĕс марсем"

Акă кунта Шăхасан районĕнчи Ухман йалсоветне кĕрекен промколхоз членĕсен ларăвĕн, сут ĕçне тĕрĕсленĕ протоколне кăтартатпăр.

### Протокол

Февралĕн 8-мĕш Ухман й|канашне кĕрекен колхоз „Победа" обшчий собрани пулчĕ, собранинче 47 çын арçын, хĕрарăм 15 çын.

Итленĕ: Рогошкин Ивана айăпланă пирки тĕрĕс марри йе тĕрĕсси çинчен сўтсе-йавнă.

Йышăннă: Рогошкин Ивана айăплани тĕрĕс мар, сут тĕрĕс туман.

Пуху пуçлăхĕ Абрамăв

Çыруçи Михайлăв Григорий.

Анчах промколхоз пухăвĕ, сут тĕрĕс туманнине тупнă пулсан та, малала вăл сута мĕн тума хушать—протокол çине кăтартман, тепĕр хут пăхма хушать-и йе ĕçе пĕтерсе ларгать—паллă мар. Ухман промколхозĕ касациле жалăбăсăрах пăхать, малала сутпа айăпланнă çынсен, касацилĕ жалăбăсене Ухман промколхозна памала пулас, вара Ухман промколхозĕнче ĕçлекенсем сут пригăвăрĕсене пăхса тухса ген те тума пултарĕç.

А. Куçмин.

## Архитектăр шыраççĕ

—Колхоз правлени ларăвĕнче мĕнле ыйту сўтсе йаваççĕ пайан?

—Канцељари умне уборнăй тăвас ыйтува.

—Ун çинчен правленин иртнĕ ларăвĕнчех сўтсе-йавнăччĕ-çке!

—Пайан тата сўтсе йавмала?

Малала çырса панă калаçу тата уйăх çурă иртсен пулса иртет:

—Колхоз правлени ларăвĕнче пайан мĕнле ыйту сўтсе-йаваççĕ?

—Канцељари умне уборнăй тăвас ыйтува.

—Ун çинчен правленин иртнĕ ларăвĕнчех сўтсе йавнăччĕ-çке.

—Пайан тата сўтсе-йаваççĕ.

Тата уйăхран каллех çавăн пек калаçу.

Вăл ыйтува çулталăка йахăн вăхăт хушшинче 7 хут колхоз правленин заçеданинче хĕрўлĕн сўтсе-йавнă. Анчах çав тери „пысăк" строителĕствă пайанхи кунтанпа та никĕсне тунипех тăрать.

Вĕсем уборнăй тума Шупашкартан „архитектăр" парасса кĕтеççĕ. П. КИРИЛЛОВ.

## Куç хыçĕнче вĕренни

— Çĕрпў районĕнчи 2-мĕш Вăрманкас шкулĕнчи учителсем ачасене лайăх çырма вĕрентессишĕн тăрăшмаççĕ. Малтанхи çур çулта вырăсла 4 хут, чăвашла 5 хут çеç çыртарнă.

—Ачасене лайăх çырма вĕрентес тĕлĕшпе мĕн тăватăр?

— Хамăр „заочнă" вĕренетпĕр.

—Ачасем?

—Ачасем те „заочнă" вĕренеççĕ. Ф. ПЕТРОВ.

# Ыйхăламан куç

*М. Е. Салтыков—Щедрин*

Пĕр патшалăхра пурăннă—пулнă Прокурор, пулнă унăн икĕ куç: пĕри—ыйхăлаканни, тепĕри ыйхăламанни. Ыйхăлакан куçĕпе вăл нимĕскер те курман, ыйхăламаннипе—ниме йурăхсăр йапаласем çеç курма пултарнă.

Çак патшалăхра авалранпах çапла тунă пулнă: обывателĕн ыйхăлипе ыйхăламан куçлă ача çуралсанах, ревизи кĕнеки çине—„Проказникăв Куралес обывателĕн, Болотă çинче, Прокурор йатлă ачалласкер çуралнă" тесе çырса хунă. Унтан вара ачалласкер çитĕнессе кĕтсе пурăннă.

Çаплах пулнă халĕ те.

Ачалласкер çĕр çумĕнчен те хăпма ĕлкĕреймен, кантуртисем ăна çитсе каланă:

— Пожалăста!

— Хавассăнах. Анчах çенатăр[1]) вырăнĕ час пушанĕ-ши?

— Ах, кăмăл тăвăрсам. Пушансанах кирлĕ пулаť.

— Тоттă.

Ачалласкер йакалкаланă, тĕкĕр çине пăхнă та, лерен те мĕнле чейе çын хăй çине вăрттăн пăхнине курах кайнă. Хайхискер хăйех пулнă мĕн. Йураť. Пĕр усал сăмах каламасăр-тумасăр çав самантрах ĕçе тытăнаť: ыйхăлакан куçĕпе нимĕскер те курмасť, ыйхăламаннипе ниме тăман йапаласем кураť.

Харампырсем, елекçĕсем, чуниллисем, тискер кайăкла çынсемпе вăрăсем ачалласкер хăйсем çине ыйхăламан куçĕпе пăхнине кураççĕ те, хăраса ўкеççĕ. Кун пирки мĕн тумаллине шухăшласан-шухăшласан, пурте ыйхăламан куç йенчен пăрăнса Прокурорăн ыйхăлакан куçĕ хысĕнче пытанма канаш тăваççĕ. Сылтăм йенче вара ни путсĕр ĕç тăвакансем, ни вăрăсем, ни чуниллисем ĕмĕрне те пулман пек, йап-йака та тап-тасан курăнса тăнă; Прокурора, тĕрĕссипе каласан, пĕртте интереслентермен: ахаљ суйеççĕсем, çапкаланса çўренсем, икĕ питлĕ çынсемпе йăпăлтисем çеç йулнă.

Ачалласкер ыйхăламан куçне т п-таса çавракурăмсем уçăлнине савăнсах кайаť. „Неуштă,—шухăшлаť вăл,—пуçлăхсем еп тăрăшнине асăрхамĕç?"

Тытăнаť вара вăл сутпа тытăм пайĕсен хирĕсем тăрăх çўреме. Çўренĕ май шăхăркаласа илет: „Сыхланар! Пĕр кашăк шывра путарса вĕлерĕп!"—тет.

Курах кайаť хайхискер: пĕр çын кăшкăрмалипех кăшкăраť: „Çаратрĕç! Баťушки, хурах", тет.

Паллах, вăл çаралса йулнă çын йенеле:

— Мĕн ес, хăйамат, тытса пăрахнă пек кăшкăрашатăн? Ак еп сана!

— Вăрăсем, Прокурор Куралесыч, вăрăсем!

— Ăçта вăрăсем? Мĕнле вăрăсем? Суйан ес: нимле вăрăсем те пулман, пулас та çук (лешсем ыйхăлакан куçĕ йенче, сăмси айĕнчех пытанса ларнă). Ăна есĕр, ĕçсĕрсем, йури ниме кирлĕ мар жалăбăсемпе пуçлăхсене чăрмантарасшăн... Тытса арĕслĕр вăрă пур тесе елеклекеннине.

Утаť малала, илтет: Прокурор Куралесыч, вçаткă илекенсем пусмăрласа çитерчĕç. Вçаткă илекенсем, сăхăмсем! Аскăнсем!

Ăçта вçаткă илекенсем? Мĕнле аскăнсем? Нимĕнле вçаткă илекенсене те курмастăп еп. Йури ăна есĕр, хăйаматсем, çын чапĕсене пĕтерес тесе кăшкăрашатăр. Тытса арĕслес ку елеклекен çынна!

Татах малала утаť, илтет:

— Хысна пурлăхĕпе общчĕствă пурлăхĕсене йăтса пĕтереççĕ! Прокурор Куралесыч, мĕн пăхатăр есĕр? Ав, вăл çаратаканĕ вон!

— Ăçта сăтăрçăсем? Кам хысна пурлăхне тустараť?

— Авă, авă. Вон вĕсем! Вăрланă укçасемпе вон вăл мĕнле пысăк çурт туса лартрĕ. А лешĕ вăл—хысnанне темиçе пин теçетин çĕр вăрларĕ.

— Хуллентерех! Суйан ес, хăйамат! Сăтăрçăсем мар вĕсем—собственниксем. Хăйсен пурлăхĕсене тытса пурăнма вĕсен аллисенче докумĕнтсем те пур. Йури есĕр ăна, ĕçсĕрсем, харпăрлăх принципне йурăхсăра кăларасшăн кăшкăрашатăр. Тытса хупас кăна та.

Кайнăçем—ытларах. „Упăшки арăмне хĕнесе минтретнĕ." „Ăча çаратнă." „Кăна вĕлернĕ". „Нимĕскер те есĕр, Прокурор Куралесыч, асăрхамастăр!" тенине илтет.

— Епĕ-и асăрхамастăп? Ман куçсем мĕнлине есĕ курнă-и? Пĕччен çеç вăл ман; анчах, ах, мĕнле, инçе курмастăп-ши епĕ унпа! Вăл çеç те мар, санăн чунна та, ĕçсĕрĕнне, витĕрех куратăп. Сирĕн, ĕçсĕрсен, мĕн тăвас килнине те ăнланатăп: çемйе çыхăнăвĕсене аркатас килет сирĕн. Тытса арĕслес ăна!

Пĕр сăмахпа, пĕтĕм сойузсене суйласа тухса пур çĕртре те çакна тупрĕ: сойузĕсем, хăйсем ăссĕн, пĕр сиккеленмесĕрех лараççĕ, анчах кăшкăравçăсем, çăварĕсене вăхăтра хупламасан, вĕсене часах такăнтарасшăн.

Ачалласкер патшалăх сойузĕсем патнеле çитсен, каласми те пулчĕ. Ыйхăран хăраса вăравнă çын пек, кăшкăраť кăна: „Тытса хупас! Çыхас ăна! Çапса хĕсес! Пăчăнгарас!"—ыйхăламан куçĕ хăйĕн урапа пек çаврăнкалаť.

Ачалласкер кунсерен çапла чупса çўрет, сойузсене сыхлаť, каçпа киле канма тавранаť. Краваť çине выртаť те шухăшлама тытăнаť; „Пурне те епĕ кирлĕ пек, пуçлăхсен кăмăлне каймала турăм. Сăтăрçă ене, киревсĕр ĕç тăвакансене ыйхăламан хăрах куçпах салатса пĕтертĕм, ĕçе пăсакансене, кирлĕ мар жалăбăсемпе пуçлăхсене чăрмантаракансене хупса лартрăм. Тап-таса та йап-йака. Пуçлăхсем те хăйсен йенчен, ман ĕçе асăрхамасăрах, хакламасăрах тăмĕç-ха".

— Сăмахран, хама мĕн сунам-ши?—тенĕ вăл хăйне хăй.— Çената кĕрес тес—хаљ еп хăрах хăлхапа аванах илтетĕп-ха, çеначĕ вăл манран вĕçерĕнеймест те... Вăт... мĕне кайас пулсан, халех мар хăť, вăхăчĕ вăт... мĕне... çук ĕнтĕ, унта шăрша-маршă пĕлми пулсан тин çитсен те йураť. Çук, вăт халех, çак вăхăтрах, мĕн сунам-ши хама? А?

---

[1]) Çенат—патша Раççейĕн аслă учрежденийĕ. Çенатăр—унăн членĕ.

Астарнă-астарнă та хăйĕн ăс-пуçне, астарсах та çитернĕ. „Мĕн пулсан та, хăвăртрах авланас пулаť—вăт мĕн",—тенĕ вăл.

Хĕр шырама ыйхăламан куçне ĕçе йанипе, часах тупаť те. Ни сăмахпа каласа, ни перопа çырса ĕнентерейми хитре Агрипинă йатлă хĕре тупаť вăл. Икçĕр пин тенкĕ укçа та пур иккен унăн.

Авланаť. Завитайĕвăн кухмистĕрскинче[2]) чаплă туй туса иртерет те киле таврăнаť.

Курасшăн ачалласкер çĕнĕ арăма, анчах лешĕ темшĕн ыйхăлакан куç тĕлне пытанса тăраť.

Сасартăк хыпăнса илсе: „Агрипинă мар еп, Акахви! Менелђник те манăн февралĕн 5-мĕшĕнче пулаť,—тет лешĕ.

Вăт тăк штукă! Ачалласкер хăранипе кăвакарса кайрĕ: неушлĕ вăл хăй ĕçне тунă вăхăтра ăна усал-тĕсĕл пырса хутшăннă?

— А... а... кахви куран!—терĕ вăл.

Пăхаť: Акахвин те, хăйĕнни пекех, хăрах куçĕ—ыйхăлаканни, тепĕри—ыйхăламанни; хăйĕн ыйхăламан куçĕ—сылтăмми, арăмĕн—сулахайĕи. Прокурор ĕçне туса пурăнма пурнăç туса панă пекех пулса тухнă вĕсем.

— Качча тухма пурлăху пулнă-и сан?

— Нимĕнле пурлăх та çук, пурĕ те хăрах ыйхăламан куçăм çеç.

Ах, аçа çапса кайтăрах! Агрипинăччĕ, сасартăк Акахви пулса тăвă. Çакнашкал ĕç мĕнле пулса тăни çинчен шухăшлама тытăнчĕ вăл. Çăмăллăнах пулнă иккен. Вăл ыйхăламан куçĕпе пĕр йенеле пăхкаласа тăнă вăхăтра, Агрипинă минутлăха айаккала пăрăннă та, офицер арăмĕ пулса тăнă. Хăйне ваљљи вара вăл... Акахвийа илнĕ.

Нимĕн тума та çук ĕнтĕ. Завитайĕва туй тума панă укçана ахаљ пĕтермеле мар—мĕнле те пулин пурăнасах пулаť.

Çывăрма выртнă вĕсем, анчах сыхланса ĕлкĕреймен: чалартаççĕ куçĕсене пĕр-пĕрин çине, сехре хăпса тухмала. Прокурорне çав тĕрлĕ хăрушă, арăмне хур çине шыв сапнă пек, ним те мар.

— Ес вупăр карчăк-им?—ыйтнă вăл арăмĕнчен.—Кала!

— Çук, еп вупăр карчăк мар, сан саккунлă арăму. Халиччен Апраксин пасарĕнче вăрланă чăлхасемпе сутă туса пурăннă.

— Мĕнле „вăрланисемпе". Мĕнле еп сана тытайман?

— Кама тытма пултаратăн-ха ес? Куçупа йаланах пĕр йенеле пăхнипе сулахай сăмсу шăтăкĕ айĕнче мĕн тунине те курмастăн.

— Апла пулсан, вăрăсене иккĕн пĕрлешсе тытар. Епĕ—сылтăм йенчен, есĕ—сулахайран.

Пĕр сăмахпа, çав тĕрлĕ аван пурăнма тытăнаççĕ. Çулталăк иртсенех вĕсен, çавнашкалах, ыйхăламан куçлă ача çуралаť.

— Вăт мыскара!—тĕлĕннĕ ачалласкер, хăйĕн пирвайхи ачи çине пăхса.

Тин вара вăл ыйхăламан куç мĕнле хаклă пулсан та, икĕ ахаљ куçсем унтан та хаклăраххине ăнкартса илнĕ.

Служби ун хăйне май иртсе пынă. Тĕрмесене кăшкăравçăсемпе тултарса лартнă вăл, çав вăхăтрах сăтăрçăсем, вçаткă илекенсем, сăхăмсем, концеççионерсемпе чăн-чăн усал ĕç тăвакансем унăн ыйхălă куçĕ тĕлĕнче пытанса пурăннă.

Нумай иртни çапла, сахал-и, Прокурор хуллен икĕ хăлхипе те „уксахлама" пуçланă. Ыйхăламан куçĕ те хуллен—майăн хупăнса ларакан пулнă. Хаљ ĕнтĕ шăп çеç, шăршă-маршăна туйасси те пĕтиччен ĕçлеме çената кĕме васкамали вăхăт.

Илтет... чĕнеççĕ.

Çыхса тунă фуфайкă тăхăнса йанă вăл, урисене чăлха пуçĕпе çăматăсем ăшне чикнĕ, хăлхисене чўпĕкпе питĕрнĕ, йăвăç çăвĕле сĕрĕннĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ, Акахвийĕ кĕрĕк çинчен шарăхпа çыхнă ăна. Вара çената тухса кайнă. Çенатра ларнă çĕрте, малтанлăха мĕнле тĕлĕк курасси çинчен шухăшласа утнă вăл.

*Хветĕр Уйар* куçарнă.

---

[2]) Кухмистĕрски—столовăй, хаљхи ресторан.

## Капкăн

Çырăнса илес текен республик тулашĕнчи чăвашсен подпискă укçине (кашни уйăха 25-шер пус) çак адрĕспа куçармала: „Чебоксары. Дом связи. Союзпечать".

Укçине çав адрĕспе куçарсан журнал кашни подписчик патне кунта пичетленĕ адрĕспа пыраť.

Подпискă срокĕ 3 уйăхран кайа мар пулмала.

Чăваш республикĕнчисем — çывă хри почтă кантурĕсемпе Сойузпичет уйрăмĕсенчех çырăнса илме пултараççĕ.

Журналăн çитес номĕрĕ „Йумах йарăп йуптарăп" йатпа тухаť.

За ответст. редактора Ф. Александров Секретарь и вып. редактор И. Илларионов.

Сдано в производство 25-III-36 г. Подписано к печати 7-IV-36 г. Упол. Чвашглавлита № 215.

Заказ № 554. Тираж 6500. Формат бумаги 59×84 1/8 Об'ем 1,25 печ. лист В 1 печ. листе 50 тыс. знаков.

Из-во газеты „Канаш"

Адрес редакции: Чебоксары, Дом печати.

Г. Чебоксары, типография № 1 Чувашгиза Канашская, 16.

Хакӗ 25 пус




Редакцирен асӑрхаттарни:—Ӗҫекенсем ҫинчен редакцийе сахал мар ҫырусем килеҫҫӗ. Вӗсен сӑнӗсене „Капкӑн“ ҫине пурне те кӑларма майсем ҫукки паллах. Ҫавӑнпа епӗр вулакансене ҫак картин айне хӑварӑн колхозри чи паллӑ прогулщчик—пйанҫӑ йатне ҫырса ҫтена хаҫачӗ ҫине кӳртсе лартма ҫӗнетпӗр.